13-мĕш çул тухать. Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

# Капкăн

№ 3 март 1937




— Фашиссен тискерлĕхне хирĕç паттăрăн кĕрешекен Испани ĕçхĕрарăмĕсене — клас тĕлĕшĕпе тăван йăмăксене çулăмлă салам!

## УЛПУТСЕМ

Париж хулин пĕр пысăк урамĕнче, капăр ресторанăн çтена çумĕнчи сĕтел хушшинче типсе саралса кайнă икĕ старик, ĕлĕк помещик пулнăскерсем, халап çапса ларaççĕ.

— Ну, мĕн пур санăн, мĕн пур! — тет пĕрремĕш помещикĕ сассине хăпартарах. — Мĕн есĕ ман умра хĕвăн именипе каппайса ларатăн. Пĕлетĕн-и есĕ, милостивый государ, ман именире халĕ пĕр сухапуç те тупма çук. Ман имениpe трактăрсемпе сухалаççĕ. Пĕлетĕн-и есĕ ман имениpe кăçал тырă мĕн чухлĕ туса илнĕ, а?

Иккĕмĕшĕ пĕрремĕшĕ патнерех пуканĕпе сиксе ларса ăна пўлсе калать:

— Тĕлĕнмеле санран, Аркади Петрович, тет. — Санăн именўнта çеç аван иккен, ыттисенне курмастăн. Пĕлетĕн-и есĕ ман имениpe ăратлă шултăра выльăх пит нумай усранине? Пĕлетĕн-и есĕ ĕнесем унта мĕн чухлĕ нумай сĕт панине?

Пĕрремĕшĕ самантлăха шăп пулать.

— Мĕншĕн-ха есĕ ман умра ĕнесемпе мухтанса ларатăн? Мĕншĕн-ха епĕ манăн имениpe лартса тунă паха сатсемпе каппаймастăп. Мĕншĕн епĕ ман имениpe халĕ çĕнĕ савăт туса хута йанипе каппаймастăп.

Иккĕмĕш ăна хирĕç калама сăмах тупаймасăр шухăша кайса, сулахай аллипе çўçне шăлма тытăнать

— Шăп пулатăн-и? — тет ăна лешĕ.

— Мĕн шăп пулма?.. Савăт, савăт! Каппайса ларатăн çав... Мĕншĕн епĕ сан умра манăн имениpe лартнă електростанципе мухтанмастăп, а?

— Калаçма та пĕлмеле мар санпала, — тет хирĕç ассăн сывласа пĕрремĕшĕ.

Иккĕшĕ те шăп пулаççĕ. Музыкă калать. Йалкăшакан йака урай çийĕн ташлакан мăшăрсем шăваççĕ. Сасартăк иккĕмĕшĕ темскере аса илнĕ пек пулса, пукан çинчен сиксе тăрса, пĕрремĕшне хулпуççинчен силлеме тытăнать.

— Калаха, милостивый государ, санăн имениpe инкубатăрсем пур-и, а? — тет.

Инкубатăрсем çук, — тет айăплăн леш ĕ.

— А-ха! — савăнса кайать тепри. — Манăн имениpe икĕ инкубатăр пур.

— Итле-ха, милостивый государ, — тет васкамасăр пĕрремĕшĕ. — Мĕншĕн есĕ ман умра инкубатăрпа каппайатăн. Пĕлетĕн-и есĕ пĕлтĕртенпе ман имениpe комбайнсем ĕçлеççĕ.

— Апла пулма пултараймаст! — хăраса пăшăлтатать лешĕ.

— Нихăçан та суйман, малала та суйассăм çук, — тет кăкăрне мала кăларса пĕрремĕшĕ. — Мана пĕлмелĕх пулнă.

Хăйĕнпе хирĕçсе калаçакан çине мăнкăмăллăн пăхса илсе, пуканĕ çине васкамасăр сарăлса ларать.

— Мĕншĕн епĕ... — çĕнĕрен тавлашма тытăнать иккĕмĕшĕ, анчах сасартăк чĕлхине çыртса шăп пулать.

Стариксем ларакан сĕтел патне фрак тăхăннă çўлĕ те мăнтăр çын пырать.

— Ей, есĕр, — кăшкăрать вăл хайхи помещиксене. — Мĕн сарăлса ларатăр! Курмастăр-и вунултăмĕш номĕрлĕ сĕтел çине ерех лартса памала. Çирĕмĕш номĕрлĕ сĕтел çине мороженнăй кирлĕ. Хăвăртрах! Вăрвар çаврăнкаламасан пĕр самантрах вырăнтан тухса ўкме пултаратăр. Ну! Марш!

Икĕ помещик çтена çумне „официантсен сĕтели" тесе çырнă тĕлте ларакан сĕтел хушшинчен васкавлăн сиксе тăрса, курпунĕсене кăларса мăнтăр çын хушнине тума иккĕш ик йеннеле чупса кайаççĕ.

В. С.

## Урттеме кураймарăм

„Микул турра пуççапма Ишекелле каймала", тенĕччĕ таксçанах „Арçури" йатлă йумахра. Унта хальхи Ишлей районĕнчи Ишек йалне асăнса каланă. Ишек йалĕ ун чухне хăйĕн „Микул турăллă" мăн чиркĕвĕпе пĕтĕм чăваш халăхĕ хушшинче палăрса тăнă. Халĕ те палăрмасăр тăракан йал мар вăл. Ку йалти колхоз хăвăрттăн вăй илсе аталанчĕ. Йал йачĕ тĕпренех çĕнелсе чаплăланчĕ. Туррине халь никам та пуççапмаст. Пурнăç çăлăнăçĕ ăçта иккенне ăнланса çитнĕ хальхи хастарлă халăх турă пирки асăнса çăвар тутине те сайа йамаст. Çак йала нумай пулмаст манăн та каймала пулчĕ. Вăл йалта питĕ лайăх колхоз кăна мар, питĕ лайăх клуб пур, вăл клубăн пĕр Çмирнов Урттем йатлă пуçлăхĕ пур, тенине илтнĕччĕ—чăн малтанах çавсемпе паллашас килчĕ.

Епĕ пынă кун паллă кун пулчĕ. Хĕрарăмсен кунĕ. Чаплă кун. Мартăн саккăрăмĕшĕ. Ну ĕнтĕ, тесе кăмăллă шухăшпа ĕмĕтленетĕп. Ку уйавра пулатăпах ĕнтĕ, тетĕп. Ку йалта пысăк клуб пур, унăн пуçлăхĕ Урттем пур—вăл партийцă-ха, чаплă иртет ĕнтĕ ку уйав, тетĕп.

Колхоз канцельарĕ тĕлĕнчен иртрĕм те, Ункă шывĕ урлă хывнă кĕпер урлă каçса, хайхи чаплă клуба пырса кĕтĕм. Чăнласах та чаплă ку клуб. Коридорĕнче тăратăп. „Ырă сунса кĕтетпĕр!" тесе çырса хунă „общий зал" тейекен алăкăн каçмакĕ çине. Пайанхи уйава ирттерме килекен хĕрарăмсен кăмăлĕшĕн çырнă пуль ĕнтĕ кăна, тетĕп. Анчах, çавăнтах, манăн хам çуралсанах пăхма вĕреннĕ кусăмсем „общий зал" алăкне мăн çĕлĕк пысăкĕш çăра ыталаса тăнине сăнарĕç. Кĕме йураманнине сисрĕм. Сулахайри „радиоузел" тейекен саспаллисемлĕ алăкран пĕр çын тухрĕ. „Епĕ Васçилйĕв, радиоузĕлăн пуçлăхĕ"—тесе хăйпе паллаштарчĕ мана.

— Аван, аван,—терĕм епĕ.—Клуб пуçлăхне курайăп-ши?.. Пайан хĕрарăмсен вечĕрĕ пулать пулĕ ĕнтĕ кунта?..

Шухăшласа тăчĕ-тăчĕ те Васçилйĕв:

— Чим-ха.. Чăнах, çапла çав,—терĕ тĕлĕннĕ пек пулса.—Пайан мартăн 8-мĕшĕ çав. Чĕнем-ха еппин... Урттеме чĕнем.

Кабинетне кĕрсе кайрĕ те, радио тăрăх пуçлăха йахăрма пикенчĕ:

— Урттем! Çмирнов Урттем!.. Кил-ха кунта!.. Клуба кил! Хĕрарăмсен кунĕ тет вĕт пайан? Пĕр темĕскерлескер те килнĕ кунта... Сана кĕтет вăл.

Кил-ха хăвăртрах!.. Хĕрарăмсем валçи вечĕр тумала пулат пулĕ?.. Ки-и-ил!?

Çак йăхăравлă сас пĕр самантрах пĕтĕм йалĕпе саланнă мĕн. Кашни килĕ итленĕ, мĕншĕн тесен, Ишекре кашни килĕрех радиорепродуктăр пур. Акă хайхи хĕрарăмсем клуб йеннеле утма пуçларĕç: инкесем, йăмăксем, тăхлачăсем, аннесем—пурте уйав йачĕпе капăрланса тумланнă. Хĕрлĕ кĕпеллисем те пур унга, шурă-чăпарлисем те, кăвакарчăн пĕсехи тĕслисем те, чĕнтĕр чĕмеклĕ саппунлисем те, çапçутă калушлисем те—пурте савăнăçлă сăнлă, пиçсе çитнĕ панулми йеверлĕ питсем. Уйав тума пухăннă вĕсем. Анчах Урттем килмерĕ. Епĕ те курайманăм ăна. „Общий зал" алăкĕ уçăлаймарĕ вара. „Ырă сунса кĕтетпĕр!" тейекен плакачĕ те „Кунта мĕн шыраса çÿретĕр" тесе ыйтнă пек, пухăннă халăха хуса кăларассăн туйăнчĕ.

Хĕрарăм йулташсем!—терĕ пĕр уçă сас.—Пайан чаплă кун. Апла пулин те, вăл куна нимĕн хатĕрленмесĕрех сире саламлатăп! Каçарăр кăçаллăха. Çмирнов Урттем кĕçĕр килеймест. Ĕçкĕ ĕçме ларнă вăл... Пĕлĕш-хурăнташĕсене пуçтарнă. Клуб уççи унăн аллинче. Уçă пулсан та, унта кĕме çук—шăнма пултаратăр. Кăçал хутман вĕт? Ĕнтĕ ан айăплăр, йуратнă йăмăксем, инкеклĕ каç тĕлне пулнă инкесем, тарăхуллă тăхлачсем! Вечĕр хупăнчĕ тесе шутлатăп...

Никама та айăпламарĕç вара айăпсăр инкесем. Йăмăксем йарăнма вĕçтерчĕç. Епĕ, ăшăрах хваттер шырама, кăçал хутман, кăçал алăк уçман клубран тухса утрăм. Ламанас.

## Упапа начар сунарçă




У П А: — Ан тертлен! Стрелковăй кружока çÿреместĕн. Пурĕпĕр тивретейместĕн.

# МИНИСТĂР

## *Пĕр министăр Сталина, Ворошилăва, Кагановича тата Микойана курни çинчен калакан халлап *)*

Йут патшалăхра пĕр министăр пурăннă. Çак министăр çĕр çинче тĕлĕнмеле çĕршыв пурри çинчен илтнĕ, унашкал çĕршыв урăх ниçта та пулман. Çĕр айĕнче те унта тĕлĕнмеле çуртсем пулнă, вĕçессе те унта пуринчен çÿлĕ вĕçеççĕ, шывсене тăвала йухтараççĕ, пур ĕçе те пĕлеççĕ. Çиленнĕ вара министăр.

— Пулма пултараймаст ун пек!

— Чăн çавăн пек унта, вашĕ çийатĕлствă.

— Йурĕ, пухăр-ха еппин манăн чи ăслă çынăмсене, пурин валлзи те плацкартлă билет илĕр. Пайан епĕ вĕсемпе унта кайатăп. Хам куçăмпа курсан вара ĕненĕп те.

— Кайсан та ĕç тухас çук, вашĕ çийатĕлствă!

— Мĕнле апла?

— Пирĕннисем нумайĕшĕ кайнă унта, нимĕн ăнланаймасăрах кайала тавăрăннă.

Министăр хăй сăмахĕнчен чакман: кайатпăр та, кайатпăр, тенĕ. Мĕн тăвас тетĕн унпа. Ну йурĕ. Туйаннă вĕсем билетсем. Министăр хăйпе пĕрле паллă учонăйа, инженера, генерала тата повăра илнĕ те, тĕнчери пĕртен-пĕр çĕршыва вĕçтернĕ. Çитеççĕ вĕсем çав çĕршыв патне, кураççĕ салтак тăрат, çĕлĕкĕ çинче çăлтăр.

— Мĕн ку?

Советник ĕнсине хыçса илнĕ, унтан пăртак шухăшланă та:

— Вăл, вашĕ çийатĕлствă, вĕсем çăлтăрсене пĕлĕт çинчен алăпа илнине пĕлтерет.

— Апла иккен.

Çитеççĕ вĕсем вырăна. Паллах, вĕсене унта кĕтсе илеççĕ, хăйсем патне илсе кайаççĕ. Министăр пăхат те тĕлĕнет, мĕнле-ха капла? Унăн генералĕ кăна мар, повăрĕ те медальсем çакса тултарнă, кунта пит простă — кепкăсем, пиншаксем тăхăнса çÿреççĕ, пĕри те хăйне мăнна хумаст. Пăхат министăр, шенел тăхăннă çын вĕсем патнеле утса пырат, çаварне чĕлĕм хыпнă. Пурне те алă парса тухрĕ те вăл, пукан çине ларчĕ, кулкалат хăй.

Советник министăра пăшăлтатса калат:

— Вăл вĕсен чи ăслă çынни пулат пулас, тет.

Министăр хăйĕн учонăйне айакран тĕртет те:

— Тух! — тет.

Учонăйĕ вара йĕрсе йарат: епĕ çавăн чухлĕ çул, çавăн чухлĕ уйăх, çавăн чухлĕ кун пурăннă, ăслăлăх ĕçĕнче ватăлнă, манăн мужикпе мĕн калаçмали пултăр, тет.

Министăр ăна ыттисем сисиччен намăс сăмахпа вăрçса илет: тух, тет, унсăрăн сана, усала, пуçна касса вĕлерттерĕп, тет.

Учонăй тухат те, хăйсем патне пынă шенеллĕ çынна ăслă ыйту парат:

— Тĕнчере пуринчен хакли мĕн-ши? — тет.

Лешĕ чĕлĕмне çăварĕнчен кăларат.

— Çын, — тет.

Учонăй кулса йарат те калат:

— Ох, култарса вĕлеретĕн. Çăмăл ыйту çине ответ параймарăн. Тĕнчере чи хакли — ылттăн вĕт, — тет.

— Йурĕ, епĕ сана çĕр пăт ылттăн парăп, есĕ çавăншăн ав çав башнйă çинчен сик, тет шенеллĕ çын кăна хирĕç.

Учонăй хăраса ÿкет те, чĕтремех пуçлат.

— Тĕрĕс, тĕрĕс, çын тĕнчере пуринчен те хакли, тесе килĕшет.

Курат учонăй хăйне намăс пулнине, чи йăвăр ыйту парат:

— Каласа пар-ха пире, ним шухăшласа тăмасăр кала епĕр мĕн çинчен шухăшлатпăр?

— Йурĕ, — тет шенеллĕ çын, — малтан инженер çине, унтан учонăй çине, унтан генерал çине, унтан повăр çине йĕркипе кăтартса: есĕ — ытларах вăрласчĕ, есĕ — тата кама та пулин сутăнасчĕ, есĕ — йут çĕре çавăрса илесчĕ, а есĕ — тутлăрах çийесчĕ, тесе шухăшлаттăр, — тет.

— А епĕ мĕн çинчен шухăшлатăп? — тесе ыйтат министăр.

— Есĕ пĕр вăхăтрах çавсем çинчен пурин çинчен те шухăшлатăн.

Учонăй çĕлĕкне хыват те, пуç тайат. — Тĕрĕс, — тет. — Халĕ ĕнтĕ есĕ пурне те пĕлнине хам куçпа куратăп. Манăн кунта ним тумали те çук, — тет.

Министăр пĕринчен ыйтат:

— Кам пулат вăл сирĕн? — тет.

— Вăл пирĕн чи лайăх стахановца.

Вара чаплă генерал тăрат те:

— Халĕ ĕнтĕ пăшал персе пăхăпăр. Кам тĕл тивертет, вăл çĕнтерет, — тет.

Генералпа тавлашса пăшал пеме ылттăн çăлтăрлă петлицăлă сарă çын тухат.

— Тавай, персе пăхар!

Çынсем буржуй портретне тупса пыраççĕ те, ăна çĕр утăм айаккарах вырнаçтараççĕ. Генералĕ пăхмаст те. Шăпа йарсан, генералăн малтан пемеле пулат. Тĕллет те генерал, курат, ăшăрхаса кайат, аллисем чĕтреççĕ. Тепре перет — вăл та тивмест. Перет те перет, пемессеренех çĕр утăм айакка лекет.

— Ну, — тет сарă çын, — мана санпа тупăшма та намăс. Пăхса тăрар кантăкран, кам малтан иртсе пырĕ — çавă маншăн перекенĕ пулĕ. Пăхаççĕ, пĕр çамрăк ача иртсе пырат. Чĕнсе илеççĕ ăна пÿлĕме, каласа пăраççĕ мĕн тумалине. Ача, нумай шухăшласа тăмаст, револьвĕр илет те, кĕрст, кĕрст тутарат, буржуйа çамкинченех лектерет.

— Куратăн ĕнтĕ мĕнле переççĕ пирĕн, — тет сарă çын.

— Кам вăл? — тесе ыйтат министăр тепринчен.

— Пирĕн чи лайăх стахановца.

Министăр хулпуççисене пăркалат, анчах хăй хумханнине палăртмаст. Вара инженер тăрат. Ăна хирĕç, чĕлĕмлĕ çын йĕвĕрлĕрех тепĕр çын тухат. Инженер ун умĕнче мухтанма тытăнат: пурне те пĕлеп тет вăл, тем тума пултарап тет, унашкал маçтăр тĕнчере те урăх çук тет. Ун патне тухнă çын итлесен-итлесен, çапла каласа хурат:

---

*) Куйбышĕв облăçĕнчи Отважнăй йалĕнче пурнакан П. И. Певнĕв колхозникрен çырса илнĕ. „Горьковский рабочий“ хаçатра пичетленнĕ.

— Телейле пурнăç тума пултаратăн-и есĕ?—тет. Инженер шухăшлать те, пуçне сулкалать.

— Çук, пултараймастăп, тет.

— Апла-тăк, çынсене урăхлатма пултаратăн пулĕ?

— Куна та пултараймастăп.

— Апла пулсан, мĕнле инженер есĕ? Ех, начар вĕрентнĕ сана! Йурĕ, сана кăштах кăтартса парăп еппин, — тет.

Хăнасене метрона илсе кайрĕç. Инженер, метрона курнă та, хăйпе тупăшакана пилĕк таран пуç тайать.

— Халĕ ĕнтĕ епĕ хамах куратăп, есĕ пур ĕçе те тума пĕлетĕн, — тет инженер.

Министăр каллех ыйтать:

— Мĕнле çын вăл? — тет.

— Вăл пирĕн чи лайăх стаханăвçă.

Каллех стаханăвçă, тесе тĕлĕнет министăр. — Стаханăв текен çын вăл пуринчен те асли пулмала. Ун патне кĕртес те çук пулĕ мана.

Йулашкинчен повăр тухать. Çав тери шыçмакскер мăн хырăмĕ чĕркуççине перĕнет, питçăмартисем йун пек хĕрлĕ.

— Ну, — тет повăр, — кама кăтартса парас ман хамăн искусствăна?

Çакăн пек каларĕ анчах, ун умне пĕчĕкрех, хурарах сăнлă çын тухса тăрать те:

— Тавай манпа, тет.

Повăр ахăлтатса кулнипе урайне кайса ÿкнĕ, икĕ тенкел çĕмĕрнĕ, генералăн урине хĕстернĕ, лешĕ çав тери хыттăн усал сасăпа кăшкăрса йанă. Тахăшĕ кантăкран пожарнăй командăна чĕнме тытăннă.

Министăр çухалса кайман.

— Мĕн тĕлĕнмели пур? Йаланах унпа çавăн пек пулать тенĕ вăл.

Горчицă илсе килме хушнă. Ăна илсе килсен, унпа кирлĕ çĕртен сĕрсен, повăр siксе тăнă та пит хулăм саспа каланă:

— Айтăр пуçлăпăр. Мĕн вăхăта ахаљ сайа йарас.

Пачĕç вĕсене тĕрлĕрен апат-çимĕç пĕçермелисем. Повăрĕ те, леш çынни те çанăсене тавăрса хĕрÿ ĕçе пикенчĕç. Иккĕшĕ те калама çук хăвăрт та хĕрÿлĕ ĕçлеме тытăнчĕç. Тĕтĕм тухать кăна, повăр çăмарта хăпартни тăвать, леш çынни те çăмарта хăпартни, повăр — окорок, леш çынни те çавнах тăвать, повăр — соçискăсем тума тытăнать, леш çынни те соçискăсем тăвать, повăр кекс тăвать, лешĕ те кекс, повăр — морожĕнăй, леш çынни — ескимо.

Повăр халран кайрĕ, пăхать леш çынни çине — леш çынни малтанхичен те хытăрах ĕçлет. Пур çимĕçĕ те тутлă та илĕртÿлĕ... Чăтма хал çитменнипе, повăр пилĕк кило чухлĕ сыр илет те çăтма пуçлать.

Леш çынни, повăрăн ĕç тухманнине курать те, калать:

— Йурĕ ĕнтĕ, тавай чĕлĕм туртăпăр. Кала-ха, есĕ миçе çын ваљљи апат хатĕрлеме пултаратăн? — тет.

— Господин министăр ваљљи тата тепĕр вунă буржуй ваљљи.

Пĕчĕк çын аллине сулчĕ те калать:

— Анчах-и? Апла-тăк манăн санпа мĕн тупăшмали пур. Епĕ вĕт кашни кунах икçĕр мĕлйун çын ваљљи çимели хатĕрлетĕп. Лайăх çиме пултаракан йедоксем манăн икçĕр мĕлйун. Пĕлетĕн-и?

Çакна илтсен, повăр аллинчи çĕççине çĕре ывăтрĕ те, йĕме пуçларĕ.

— Манăн, — тет, — сирĕн патăрта нимĕскер тумали те çук. Ватă ĕнтĕ еп тепĕр хут çĕнĕрен вĕренме.

— Кам вăл? — тесе ыйтать министăр тăваттăмĕшĕнчен.

— Вăл пирĕн чи лайăх стаханăвçă. Есĕ хăв тата мĕн тума пĕлетĕн?

Министăр çиленсе кайрĕ.

— Епĕ министăр, нимĕн тума та пĕлместĕп.

Шухăшларĕ-шухăшларĕ министăр, унăн вĕсен тĕп начаљникне курасси килсе кайрĕ.

— Манăн Стаханăв çийатĕлствăна хăйне курас килет! — тет вăл.

— Курассăр килсен, курăр, мĕн вара.

— Хăçан?

— Хут те халех!

Министăр вĕркĕнсе ÿкрĕ.

— Чимĕр-ха еппин, епĕр кайса çĕн тумсем тăхăнса килер-ха.

Гостиницăна кайса, вĕсем хаклă йышши коçтумсем тăхăнчĕç, хăйсен пур пек медалĕсене çакрĕç, пичĕсене пудрăпа сĕрчĕç те кайала пычĕç. Вара вĕсене пуйăс çине лартрĕç те Стаханăв патне илсе кайрĕç.

— Аха! — шухăшлать министăр, — Стаханăв çийатĕлствă вăл хăйĕн дворецĕнче пурăнать пулас.

Çитеççĕ Стаханăв ĕçлекен Ирминона. Хăнасем ниçта та нимĕнле дворец çуккине кураççĕ.

— Ăçта илсе килтĕр пире?

— Ăçта кирлĕ çĕре.

Вĕсене шахтăна антаракан кĕлет ăшне лартрĕç те, шахтăна антарчĕç. Хăнасем вараланса пĕтнĕ, хăраса кайнă, мĕнле шăтăка антараççĕ пире, теççĕ хăйсем. Шахтăра нихăçан та пулса курман вĕсем.

Шахтăна ансан, кураççĕ — çын тăрать, хăй хупхура, куçĕсем анчах курăнаççĕ, кăмрăк кататъ.

— Министăр ыйтать:

— Стаханăв çийатĕлствă ăçта вара кунта?

— Акă вăл, теççĕ ăна хирĕç.

Министăр Стаханăв çине пăхса илет те çиленнипе вăрçма пуçлать:

— Безобрази! Ултав! Манăн кун пек Стаханăвсем темĕн чухлĕ, епĕ вĕсене хамăн алăк патне те йамастăп, тет.

Калаçса илчĕç çынсем пĕр-пĕринпе.

Хăнасене каллех кĕлет ăшне лартрĕç те çÿле илсе тухрĕç. Хăнасем пуйăс çине ларчĕç, кураççĕ, темĕн чухлĕ халăх пухăннă, — чечексемпе, йалавсемпе тата музыкăпа.

Министăр савăннипе аллисене кĕсйине чикет те:

— Кусем пире ăстатаççĕ иккен, тет.

— Çук, сире мар. Сире пуйăспа пирĕн çĕршыври чи чаплă машинис илсе кайать. Сире хăвăртрах леçсе хăварма хушнă. Халăх машиниса ăсатать. Министăр сиссе те йулаймарĕ, пуйăс сартăк малала туртăнчĕ, сивкă-буркă пек тапранса кайрĕ. Сĕм вăрмансем, йухан шывсемпе сăрт-тусем урлă, хĕрлĕ çăлтăрсемлĕ салтаксем умĕпе çил пек иртсе пычĕ.

Вырăсларан Йехрем Иванĕ куçарнă.

*МИТТА ПЕТĔРĔ*

# ИКĔ КАЛАВ

Ку калавсене Кавăрле пичче каласа панăччĕ мана. Вăл ватă çын. Хăй калавă тăрăх, иртнĕ çулхи акатуйĕченех утмăл урлă каçнă. Епĕ ăна хурал пÿртĕнче тĕлпултăм. Ватă пулин те, ахаль лариччен кĕрĕк арки те пулин йăваламасăр — усăлă ĕç тăват. Халăх çуртне йаланах таса, питĕ тирпейлĕ тытат. Урайне урлă выртакан çÿп-çапсене тăрăх çеç çавăрса хумасăр — шăлса та кайат. Ернесеренех хăйĕн килĕнчи кинне чĕнсе (кинĕ колхозра ĕçлемен кунсенче) лĕп шывпах ислетсе урайне, саксене, сĕтелне те çутарат. Кашни сехетренех Кавĕрле старик каланча умне тухса чан çапат, пĕтĕм йал халăхне миçе сехет çитнĕ вăхăга пĕлтерет. Хăшпĕр чухне вара ку ĕçре вăл кăштах йăнăшса суйеçтерсе те илет. Акă çапла пĕрринче, çак калавсене каласа панă каçхине, епĕ урампала иртсе пыратăп. Вăл чан шаккат. Сăватап: миçе сехет? Вунна çитертĕм. Вунпĕр... Вуниккĕ... Вунвиççĕ шаклаттарчĕ Кавĕрле.

— Мĕншĕн çавăн чухлĕ!

— Есĕ пултăнам-ха? — терĕ вăл, ман çине тăрăххăн пăхса.

— Епĕ пултăм-ха та, — тетĕп. — Мĕншĕн вунвиççĕ сехет çапрăн?

— Пасăр вунпĕр вырăнне вуннă çеç çапнăччĕ те, — терĕ Кавăрле, пĕр кулмасăр, тунмасăр, — Пĕрре кайа пулнă вĕт. Вара çавăн шайне хальхинче пĕрре ытлашши çапса тултарас терĕм.Уншăн нимĕнех те пулас çук. Кĕçĕр терĕслеме килмеççĕ-ха, — вуннăрах çывăрма выртнă вĕсем. Ата, пÿрте кĕрсе ларăпăр.

Кĕтĕмĕр пÿрте, Кавăрле старик, калаçас тесен каççах кайат вара. Хĕрсе кайнă вăхатра çынна сăмах хушма та ирĕк памаст. Акă пуçланчĕ унăн пĕр кутăн упăшка арăмĕ çинчен калакан калавĕ.

## Кутăн упăшка арăмĕ

— Нумай пулмаст карĕç-ха вĕсем. Хам ăсатса йатăм, — терĕ Кавăрле, никамăн йатне те, хушаматне те асанмасăр. — Упăшкипе ĕçкĕрен таврăнаççĕ. Хăрах касри йыснăшĕсем патĕнче хăналаннă пулас. Ăна-кăна, ăçта пулнисенех чĕптесе тăрраймарăм. Упăшки çав тери ÿсĕр. Çул варрине йăваннă та, тăрасшăн та мар. Арăмĕ йалăнса сĕтĕрет. Тĕрлĕрен сăмахсемпе ÿкĕтлет. „Ата ĕнтĕ, киле çитсен те çывăрма ĕлкĕретĕн... Мĕншĕн çав тери ĕçсе тултартăн-ха?“ — тет. „Есĕ ĕçейместĕн те вĕт, — тесе ĕнерлесе йĕкĕлтет ÿсĕр упăшки — Арçынсемпе йалтах танлашрăм, тесе сăмахупа çеç мухтанма пĕлетĕн, ман чухлĕ те ĕçейместĕн“ — тет. Арăмĕ çиленмерĕ. „Сан пек арçынсемпе танлашасшăн йĕрсех те тăмастăп“, тесе хучĕ.

... Кутăнах çав унăн упăшки. Колхоза кĕриччен: „Хам кĕресшĕн епĕ, ертелпе пĕрле ĕçлесшĕн... Анчах арăм итлемест: кĕресшĕн мар, ĕçлесшĕн мар“, тесе йал çине йат сарса çÿретчĕ. Акă халĕ, хăй ыррăн ĕçлени çук нихăçан та — арăмĕ ĕçлет, преми те илет. Пĕтĕм ертел савса тăрат ăна, унпала мухтанат. Кăчухнехи саманара çавăн пек кутăн упăшкашăн çавăн пек ăслă арăм сайа кăна кайат вĕт?

— Çапла çав, — тесе çирĕплетрĕм епĕ Кавăрлен пĕрремĕш калавне.

Вăл, вăхăта вăраха йамасăр, иккĕмĕшне пуçларĕ.

## Самар кулачи

— Тĕр-тĕр халап нумай пулĕ... Çынсем çинчен сăмах çаптарнипе кăна пулмĕ, хам çинчен каламха, — терĕ Кавăрле. — Ĕлĕкех еп пĕрре, тахçанах хамăн Рахур йатлă пĕр тантăшпа çĕр шырама Самар йенне кайма шутларăм. Унтала тулă аван пулат тетчĕç. Самар кулачи çисе пурăнас тетпĕр пулат. Вăл йупах тыхине, епĕ пĕртен-пĕр ĕнене сутса йатăм — вара çав укçасемпе тухса кайрăмăр. Ĕç ăнăçлă пулмарĕ. Хусантанах ĕçме пикеннĕ те, антăранă çех вара. Хамăр ĕмĕтленнĕ çĕре, Самара çитеймен. Чĕмпĕр тĕлĕнчех хăваласа антарнă. Ĕçнĕ тепĕр хут. Ăн йалтах сухалнă. Вăранатăп та, нимĕн те пĕлместĕп: те ирхине, те çĕрле. Хĕвелĕ те курăнмаст, уйăхĕ те çук. Тĕтре... сĕт пек шапшурă тĕтре йасăрланат. Атăл... Пристăнь иккен, кăшт ăн кĕчĕ. Пĕрене... Пĕрене купи айккинче йăваланса выртатăп. Рахур çумра çук. Ăçта вăл? Аран шыраса тупрăм. Хамран инçе те мар, пилĕк таран çаппа çарамас вырта парат. Тĕлĕнсе кулмали ĕçсем татах та темĕн чухлĕ пулса иртрĕç. Вĕсем çинчен никама та каламан халиччен, сана çеç калатăп. Аван мар вĕт. Рал хура вăратрăм та шăлавара хывса патăм. Хамаялти шурă йĕм вĕççен çеç тăрса йултăм. Вара шăавар илме тесе толчока утрăмăр. Тĕл пултăмăр пĕр шăлсăр карчăка. Сакăр саплăклăскерне тăвăр тенкĕ ыйтат. Çичĕ тенкĕпе килĕшрĕ Рахур. Укçине х пашларĕ. Çук. Вара йĕмне хывса кайнă та, кам сана укçа хăвартăр?“ терĕм. „Çапла çав, — ăнланса илчĕ. — Тÿле-ха маншăн“, тет. Мĕн тăвас тен йулташа пулăшас пулат вĕт. Парас. Алла касйене чикетĕп. Укçа!.. Тепĕр хут ансăр пулса тăтăм вара. Кăсйе те çук манăн, укçа та çук... укçа кăсйине каснă та кайнă. Çав Рахура çарамаслантаракачнийех хăтланнă пулас. Хăй саплăклă шăлавара та илеймерĕмĕр. Карчăк хирĕлме пикенчĕ тата: „Килĕшетĕр те, илместĕр! Шпанасем пуль есĕр“, тет.

Чĕнмерĕмĕр. Мухмăр иксĕмĕрĕн те. Пуç пăркăчланă пек ыратат. Выçă. Хырăм çурăм шăмми çумнех çыпçăнса ларнă пекех туйăнат. Калаçс та килмест. Каллех пристăнь çине антăмăр. Грузчиксем арпус пушатаççĕ. Ыйтрăмăр. Пĕр çуракскерне тыттарчĕç. Пы-ы-сак арпусĕ. Хырăм кÿпенчĕ кайре. Рахур та аран-аран сывлат. Кăштах выртса кантăмăр. Каллех çийес килет. Пĕр-пĕрин çине пăхатпăр. Иксĕмĕрĕн те икĕ пус укçа çук.

„Ыйтсан параççĕ-ши хула çыннисем?“ — тет Рахур

„Ыйткаласа çÿремеле-и ĕнтĕ?“ — тетĕп.

„Çÿремесĕр. Выçăхса вилеймĕн,“ — тет ман Рахур. Вара, хулана хăпарса, икĕ хуглă çурта кĕрсе кайрăмăр.

„Пуçтарса çÿреттĕмĕрччĕ те?“ — сăхсăхса илчĕ Рахур.

„Чаво?“ — терӗ кил карчӑкӗ вырӑсла. Рахур пӗр сӑмах та пӗлмест: „Ҫӑкӑр памӗҫ-и тесе ҫӳреттӗмӗр те?“

Кил карчӑкӗ каллех „чаво?“ — тесе хучӗ. Епӗ чӗнмерӗм. Рахур ман ҫине пӑхрӗ те: „Ҫын темеле-и ӗнтӗ ҫакна! Епӗр ыйтнине те пӗлмест пулаӑ те... Йурласа йарас пуль пӗреххут“, терӗ тарӑхса. Хӗрелсе каре те вара, турӑ йурри йурласа йачӗ чӑвашла. Епӗ те сӑхсӑхма пуҫларӑм. Нуша тем тума та вӗрентӗ. „Чи-чи кӑсйана“ турӑ йурри туса йурларӗ Рахур. Шӑрантараӑ ҫеҫ пӗр такӑнмасӑр. Аран-аран кулмасӑр чӑтса, вӑл кӑшкӑрнӑ май, хӑвӑрттӑн сӑхсӑхса тӑтӑм еп. Кил карчӑкӗ ҫине Рахур шӑтарас пек пӑхнӑ та, мӑйне тӑсса хунӑ:

„Чи чи... и... и кӑсӑйа! тет.
Ӑҫта кайан кӑсӑ.. ӑ... йа?
Кантӑр вӑрри вӑрлама.
Йе хуҫи..и.. и курсассӑн?
Тарӑп-тарӑп хӑтӑлӑп.
Йе уруна хуҫсассӑн?
Тимӗрҫе кайӑп сыптарӑп.
Йе тимрӗҫ килте ҫук пулсан?
Тапӑп-тапӑп, тапӑ айне кӗрех кайӑ..ӑ..ӑп!
Чи-чи чипер инке. Ҫӑкӑр памаҫҫӗ-и тесе
ҫӳреттӗмӗр те?“..

Ҫаплах каласа йурлаӑ вӗт ача. Кӑшни сӑмахне темиҫе тӗрлӗ авкалантарса кӑшкӑраӑ. Кил карчӑкӗ иксӗмӗре икӗ кукӑль тыттарчӗ. Тепӗр пӳлӗме ҫӗмӗрттерсе кӗтӗмӗр. Каллех „чи-чи кӑсӑйа“ пуҫланчӗ. „Тапӑп-тапӑп тапӑ айне...“ тейекен сӑмахӗ тӗлне ҫитеймерӗ Рахур. Пирӗн ҫине тӗлӗнсе пӑхса тӑракан кил хуҫи: „Акӑ лайӑх кӑна тапӑп-тапӑп та, лаша тапнӑ пек, иксӗре те сирпӗтсе кӑларса йарӑп! — тесе ахӑрса пӑрахрӗ. — Мӗн капла сӗт рӗнсе Чӗмпӗр тӑрӑх чӑваш йатне йарса ҫӳретӗр!“

„Есӗ те чӑваш-и? — ыйтрӗ Рахур. — Пӑртакҫах ҫӑкӑр йе кукӑль татӑкӗ памӗҫӗ-и тесе ҫӳреттӗмӗр те?“

Хуҫа ахӑлтатсах кулса йачӗ. Хамӑр та кулатпӑр. Капла хӑтланса ҫӳреме хушмарӗ. Атӑл хӗрринче ӗҫ пур тенине пӗлтерчӗ. Кайрӑмӑр. Икӗ кун кунласа, сатра, ҫилпе силленсе тӑкӑннӑ панулмисем пуҫтарнӑ ҫӗрте ӗҫлерӗмӗр. Укҫине илтӗмӗр те, пурпӗрех Самара ҫитсе пулмасӑ тесе киле тухса килтӗмӗр.

— Урӑх каймарӑр-и вара? — ыйтрӑм епӗ.

— Тагах кайасшӑнччӗ епӗ, — терӗ Кавӑрле, тепре кайса ҫӳрейменшӗн хуйхӑрнӑ пек, ӳкӗтлӗ сасӑпа. — Лашана сутса кайасшӑнччӗ. Арӑм ӳкӗте кӗмерӗ.

— Мӗншӗн хамӑр йалтан уйӑрӑласшӑн пулнӑ-ха есӗр?

— Ҫитмен пурнӑҫ тем ҫинчен те шухӑшлаттарӗ. Каларӑмҫке ха, Самар кулачи ҫисе пурӑнасшӑн пулнӑ, терӗм. Акӑ хаӑ, унта каймасӑрах кулачӑ та, пӳремечӗ те, кукӑль те пур — пурте хамӑрӑн, пурне те хамӑр тӑватпӑр. Ахаӑтен мар, пурсӑмӑр та ҫак колхоз йӗркине тавтапуҫ калатпӑр. Пӗр ҫав йӗрке ҫеҫ вӗт пире ҫӑлӑнӑҫ тупса пачӗ. Чунӑм ҫамрӑкланчӗ. Ватӑлас та килмест.

— Ҫапла пулмасӑр, — ҫирӗплетрӗм епӗ Кавӑрле старикӗн сӑмахне.

Вӑл ӳлӗ рен те хӑй патне кӗрсе тухма хушрӗ. Тагах та калавсем каласа парӑп, терӗ. Епӗ итлерӗм. Вӑхӑт пулсан, ыран-тепӗркун каҫсенчех килсе ларӑп, терӗм.

# Урамра

Чурпайӗнчи (Йетӗрне районӗ) Ҫергейӗв А. комсомолӗс тӗн праҫникӗсенче ӳсӗр ҫӳрет. вечӗрта пионерсене ҫапса макӑртса пӗтернӗ.



— Мӗне есӗр, ачасем, тӗлӗнсе хытсах пӑхатӑр?

— Пире вожатӑй комсомолӗссенчен пример илме хушнӑччӗ, халӗ акӑ пӑхатпӑр.




**Çĕрпӳ районĕнчи „Планетӑ“ колхозникĕсем тӑватттӑн ыйтаççĕ:**—Суха тунӑ, йупа шӑтӑкĕ алтнӑ йе ытти чухне тупнӑ паллӑ йапаласемпе мĕн тумала?

**Ответ:**—Шупашкар районĕнчи Апаш тата Куславкка районĕнчи Паланкасси çывӑхĕнче чулран, бронзӑран тунӑ мӑлатуксем, тӑм чӳлмексем, тискер тата килти выљӑх-чĕрлĕхсен шӑммисем, йатарласа капӑрланма бронзӑран тунӑ йапаласем, пытарнӑ çынсен шӑммисем, т. ыт тупнӑ. Çав йапаласене тĕпчесе вĕреннипе темиçе пин çул ĕлĕк чӑвашсен çĕршывĕнче пурӑннӑ халӑхсен пурнӑçне пĕлме пултаратпӑр. Ун йышши йапаласене Чӑваш тĕп музейне парас пулаť. Сирĕн колхозниксем сысна ферми патĕнчи тислĕке тӑкнӑ чухне тупнӑ 25 сысна çурине музейе памала мар. Мĕншĕн тесен, вĕсене кура темиçе пин çул авал пурӑннӑ халӑхсен пурнӑçне сӑнаса пĕлме çук, тĕнчере халĕ те пурӑнакан йапӑх çынсен ĕçĕсене сӑнаса пĕлме çеç пулаť.

**Йалкай ыйтаť:**—Кала-ха, Капкӑн тусӑм, пирĕн Вӑрмар районĕнчи Хуруй йалсовет председателĕпе çекретарне ӑйхӑран мĕнпе вӑратас (пĕрремĕш квартӑлти укçа-тенкĕ пухас плана мартӑн 1-мĕшчен пĕр процент, вӑрман хатĕрлес плана 40 процент кӑна тултарнӑ, йединоличниксене çуракине хатĕрлентермен, йалхуçалӑх машинĕсем хӑшпĕрисем йур айĕнчех т. ыт. те). Вӑратмали машин çук-ши?

**Ответ:**—Пур. Венгрин Будапешт хулинче сехет тӑвакан пĕр маçтӑр питĕ те тĕлĕнмеле будиљник (çывракан çынна вӑратакан сехет) тунӑ. Малтанхи хут, ытти будиљниксем пекех, вӑл йĕркелĕн шӑнкӑртатаť; икĕ минутран вара тепĕр хут малтанхинчен нумай хытӑрах сасӑпа шӑнкӑртатаť.

Иккĕмĕш хут шӑнкӑртатнӑ хыççӑн 5 минут иртсен, будиљник çывракан çынна тӑма вӑхӑт çитни çинчен виççĕмĕш хут асӑрхаттараť. Çывракан çынна виççĕмĕш хут асӑрхаттарнӑ чухне будиљник шӑнкӑртатмасť вара, вӑл пĕтĕм пӳрте илтĕнмеле темиçе хут „кахал“ тесе хытӑ кӑшкӑраť. Çав сехете лартмала Йегорӑвпа Лаврентйĕвӑн çывӑрса лармали „канцељари“ тесе йат панӑ пӳлĕмне.

**Ыйту:**—Пирĕн Октӑбĕр районĕнчи (Тутар республикĕ) Илӳтка йалĕнчи йалпо лавкинче нимĕнле тавар та çук. Ытти çĕрте никам илсе пĕтереймен таварсем (сахӑр, канфет, краççин т. ыт.) пама ыйтсан, „çук“ тенĕ ответ илетĕн. Мĕн пур сирĕн?—тесе ыйтсан,—вӑтанмасӑрах: 1936 çулта 23 пин растратӑ пур,—тейĕç. Вӑл растратӑсенчен мĕнле хӑтӑлмала?

**Ответ:**—Ленинградра Францирен илнĕ моторпа ĕçлекен шӑпӑра сӑнаса пӑхнӑ. Ку машинпа хула урамĕсене, площчӑдсене йуртан, çӳпçапран тата пылчӑкран, тасатаççĕ. Çак маторлӑ шӑпӑр пĕр сехет хушшинче 10 пин тӑваткал метӑрлӑ вырӑна шӑлса тасатнӑ. Илӳтка йалповне растратчиксенчен моторлӑ шӑпӑрпа шӑлса тасатмала.

**А. П. Шенни ыйтаť:**—Чалӑш куçа мĕнпе йусама пулаť?

**Ответ:**—Чалӑш куçа операци туса йусама пулаť. Вӑл операцийе тутарма куç тухтӑрĕ патне каймала. Анчах ун пек операципе сирĕн Çĕнйал Йавӑш (Вӑрнар р.) колхоз председателĕ Пухӑв йулташӑн колхоз пурлӑхĕ çине чалӑш пӑхакан куçне йусама çук. Иртнĕ кĕркунне патшалӑха тырӑ сутнӑ укçапа колхозниксем жнейкӑ илме шухӑшласа хунӑ. Анчах Пухӑв, жнейкӑ илес вырӑнне, велосипед илсе сутса ĕçнĕ. Колхозри хӑшпĕр машинсем йур айĕнчех ларнипе хӑшпĕр машин пайĕсем çуккине те куçĕ чалӑш пиркийех кураймасť. Чейе çынӑн куçĕ саккӑр сӑваť, тенĕ. Кун тӑххӑр та сӑваť пулмала.

**Шурчасем ыйтаť:**—Етем хӑй вӑхӑтне мĕнле иртернине хисепе илни пулнӑ-и?

**Ответ:**—Венӑри профессӑр пĕр 72 çулхи çын хӑйĕн пурнӑçĕнче мĕн туса вӑхӑта иртернине шутласа кӑларнӑ. Çав çын 23 çулта 4 уйӑх хушши çывӑрнӑ, 19 çул та 3 уйӑх ĕçленĕ, 6 çул та 2 уйӑх çинĕ, 6 çул тĕрлĕ вырӑнсенче пулса иртернĕ, 4 çул чирлĕ пулнӑ. Çав çын хӑйĕн вӑхӑтне хӑйне пӑхас ĕçе нумай йанӑ,—çапла вара сухал хырмах унӑн 2 çул пĕтнĕ. Сирĕн Шурча йалĕнчи (Ишлей р.) вулав çурт пуçлӑхĕ Илйин Петр мĕн туса вӑхӑта иртернине шутласа пӑхакан пулман. Иртнĕ çулхипе кӑçалхи пурнӑçне сӑнакансем унӑн пĕтĕм вӑхӑт çывӑрса, çисе, тĕрлĕ вырӑнсенче пулса тата кĕрĕк арки йӑваласа, ĕçлемесĕрех иртет (çĕнĕ кĕнекесем, хаçат-журналсем ку вулав çуртĕнче çук, икĕ çул хушшинче çур çтена хаçачĕ те тухман, нимĕнле кружок та пулман, т. ыт. те). Пуринчен ытла унӑн вӑхӑт, сухал хырса мар, сӑмса шӑтӑкне чакаласа иртет пулмала.

**Иваншков ыйтаť:**—Мĕн вӑл даљтонизм?

**Ответ:**—Хӑшпĕр çынӑн куçĕ йапаласен тĕсĕсене уйӑраймипулаť. Çав çитменлĕхе—даљтонизм теççĕ. Тухтӑрсем шутласа кӑларнӑ тӑрӑх, çынсенчен 4 процентĕ çавӑн пек çитменлĕхпе асапланаť. Мĕн пур тĕссене те уйӑрайман çын сахал пулаť. Пуринчен ытларах пĕр тĕсе, сӑмахран, хĕрлĕ йе симĕс тĕсе, уйӑрайманнисем пулаççĕ. Çĕрпӳ районĕнчи „Хĕрлĕ етновец“ колхозӑн правлени членĕсем улмуççисем качакасем кышланипе шуралнине курми пулнӑ. Ытти çĕрти шурра кураççĕ, тет. Кӑна кураймаççĕ, тет. Кун пек çитменлĕхе „даљтонизм“ теме çук, „йапӑхизм“ тесе калама çеç пулаť пулмала.

# ШЫРАСАН ТА ТУПМА ÇУК

„Хуйхă çукран хуйхă тупрăм“ тетчĕç ĕлĕкрех-хи ватă çынсем сутăн илнĕ ĕни хĕсĕр пулсан. Епĕ те çавăн пекех, пĕр çулталăклăх (1936 çулшăн) Палтайри почтă уйрăмĕ урлă (Йетĕрне р.) „Сунтал“ çырăнса илсен, чĕп чиперех хуйхă тупрăм. „Сунталĕ“ килет, анчах тӳллевсĕр „Сунтал библиотеки“ нийепле те ман пата çитеймест, таçта çухалса кайаť. Хуйхăрмалипех хуйхăратăп, каç çывăрма выртсан та ыйăх килмест, çиме ларсан та апат анмасť...

Пĕр 5 уйăх ытларах хуйхăрса пурăннă хыççăн, Чăвашиздата жалăбă çырса патăм. Кăшт пулăшу пачĕ пек туйăнчĕ. 5-мĕш №-лĕ кĕнеке—Лермăнтăвăн „Тамаҫ“ йатлă произведенийĕ ман пата çитрĕ. Шутсăрах хĕпĕртенипе, хам ташлама пĕлместĕп пулсан та, купăссăр-мĕнсĕрех чакак пек сиккелесе ташласа илтĕм. Ма хĕпĕртес мар, çухалнă йапала тупăнчĕ вĕт... Вăл „Тамаҫа“ вара, килтен ан тухса кайтăр тесе, арчанах питĕрсе илтĕм.

Ак, тамаша, ман хĕпĕртемели вăхăт нумайах пымарĕ, малтанхинчен те пысăк хуйхă çитсе çапрĕ. Халҫ ĕнтĕ тӳллевсĕр „Сунтал библиотеки“ мар, укçа парса çырăнса илнĕ „Сунталĕ“ те ман пата пыми пулчĕ. Кĕтетĕп, кĕтетĕп, çук. Ман „Сунтал“ çухалмалипех çухалчĕ. Каллех хуйхăрма пуçларăм. Хуйхăрнипе хĕрлĕ сăнăм та кĕл пек шуралса кайрĕ. Хуйхăрнипех пĕр шăл катăлса ӳкрĕ, ку та мар-ха, пуçри çӳ те тăкăнма пуçларĕ. Камран ыйтмарăм пуҫ, никам та ман „Сунтала“ куракан çук. Мĕн туса пăхмарăм пуҫ! Пӳрт кĕтессине хăма татăкĕ çине хам йатпа хушамата çырса çапрăм. Хапха алăкне те уçса хурса пăхрăм. Çук. „Аптранă кăвакал кутăн чăмнă“ тенĕ пек, аптранă йенне почтă уйрăмĕнчен хамăрăн хапха алăкне çити-çитми майак лартса та пăхрăм. Вăл та усăсăрах пулчĕ. „Сунталсем“ апла та ман пата çитеймеççĕ.

— Капла хуйхăрса усси пулас çук, почтă уйрăмне хамăн кайса пăхас,—терĕм. Тытăнтăм çӳреме. Почтă уйрăмне пилĕк хут çитрĕм. Пуçлăхĕ çук. — Отпуска кайнă,—теççĕ.

Халҫ ĕнтĕ ман „Сунталне“ мар, почтă начаҫникне—Соловйова шырамала пулчĕ. Шыратăп, шыратăп, ни Соловйова, ни „Сунтал библиотекине“, ни „Сунталĕсене“ тупаймастăп. Мĕн тăвас? Пĕр ирхине кăшт апат çикелесен, Соловйовне тупăп-и, „Сунталĕсене“ тупăп-и тесе, тухса утрăм.

— Стоп!—терĕ пĕри ман хыçра,—ăçта кайатăн? Епĕ калла çаврăнса пăхрăм та, тăра параť ман хыçра Урапакассинчи Куçмин Максăм.

— Ху ăçта чупатăн?—ыйтрăм епĕ.

— Ара, 4 уйăхлăха „На страже“ хаçат çырăнса илтĕм те, таçта çухалчĕ, нийепле те алла илейместĕп, çултан пăрăнса кайса çĕтсе çӳремеççĕ-ши тесе шырама тухрăм тата почтă уйрăмĕнче ĕçлекенсемпе те калаçса пăхас тетĕп-ха,—терĕ.

Епĕ те ăна хам мĕн ĕçпе, мĕн шырама тухнине пĕтĕмпех каласа патăм.

— Тăхта-ха, ав лешсем камсем тата? Вĕсем те пирĕн пекех тухнă,—чарчĕ мана Куçмин.

Кусем Пырçирлан шкулĕнчи учитĕлсем—Михайлăвпа Муравйов пулчĕç.

— Ăçта кайатăр капла?

— Хаçат-журнал шырама,—ответлерĕç Михайлăвпа Муравйов.—2-шер уйăхлăха „Начальная школа“ хаçат çырăнтăмăр та, таçта çухалчĕ, пĕр хаçат та илеймерĕмĕр.

— Айтăр Палтайри почтă уйрăмне, епĕр укçине унта тӳлленĕ вĕт ха... Палтайала утрăмăр. Çула май чылайăн пухăнтăмăр. Пу ин те пĕр хуйхă. Сĕпĕрленсе кĕтĕмĕр Палтайри почтă уйрăмне. Соловйов отпускăран таврăннă иккен, ĕçлет.

— Укçа тӳлене квитанцийĕ пур-и сирĕн?—ыйтрĕ Соловйов.

Епĕ хам укçа тӳлленĕ 033329 № квитанци кăларса тыттартăм.

— Ах,—терĕ Соловйов,—тупса пама пултараймастăп.

— Укçине те таврса пама пултараймастăп, вăхăт иртнĕ...

Ман 6—7 хут почтă уйрăмне çитни пустуй пулчĕ. 6 тенкĕ укçа тĕтĕмсĕрех çунса кайрĕ. Ыттисем те ман пекех илеймерĕç.

Çапла пăхаççĕ почтăра „ĕçлĕ пулса ларакансем“ жалăбăсем çине.

**М. Дангер.**

## ВЫРĂС ЧĔЛХИНЕ ВĔРЕНТЕКЕН

**Чылай шкулсенче йăнăш çыракан ачасен проценчĕ пысăк.**



**Учитĕл:** Халĕ те лайăх пурăнатпăр. Кашни тӳрлетнĕ йăнăшшăн сдеҫнă тӳлемеле тусан, тата ла ăхрах пурăнмала.




## Шупашкарта

Тротуарсене хăйăр сапмаççĕ. Шуçса ÿксе аманакансем пулаççĕ.

— Есĕ ку çуртăн килхуçи пулатăн-и-ха?

— Килхуçи пулатăп.

— Урама туххса мĕн пăхса тăран?

— Ав, лерен пирĕн йенчи тротуарпа иккĕн килеççĕ. Çавсем пăрлă тротуар çинче шуçса ÿкнине курас, тетĕп.

— Апла мар, шуççа ÿкнине куртăм тесшĕн пулĕ.

— Çук. Халĕ ÿкмен-ха. Ман çурт тĕлне çитсен, ÿкмесĕр иртсе кайаймаççĕ. Ара, манăн сăнани пур: кам та пулин шуçса ÿкнипе аманман кун сайра пулать.

## Улма сутнă çĕрте

— Иртнĕ пасарта манран улма чи малтан илекеннин алли çăмăл пулнă. Улма часах сутăнса пĕтрĕ. Пайан та çăмăл алăлă çынна сутасчĕ. Сиртен иксĕртен хăшĕн алли çăмăлтарах.

— Манăн.

— Санăн аллу çăмăл-и?.. Çук. Санăн мар, манăн алă çăмăл. Есĕ авă çав магазинра çăкăр сутакан прикашчик марчи-ха?

— Çавă.

— Апла пулсан, ал çăмăл тесе ан та калаç. Тараса çине турттарма çăкăр хуракан аллу, питĕ йăвăр пулнă пирки, туртман çĕртенех çăкăра туртакан туса хурать.

## Пĕрмайах ĕçекен

— Турхан районĕнчи Анат Чакă колхоз председателĕнчен ыйтрăмăр:

— Есĕ ма салхулă ларатăн?—терĕмĕр.

Вăл каларĕ:

— Вар ыратакан пулчĕ,—терĕ.

— Апла пулсан вар-хырăму çине вĕри бутылка хурса выртмалаччĕ. Ыратни лăпланать! теççĕ.

— Бутылка? Четвĕрт те пулăшмарĕ!—терĕ.

## Инçетри çурçĕрте

Халĕ хăш-пĕр месткомсем çумĕнче географи кружокĕсем ĕçлеççĕ́ске-ха. Çапла пĕр учрежденире пĕр бÿрократ географи урокĕнче инçетри çурçĕрте кун тăршшĕ 6 уйăх, çĕр тăршшĕ 6 уйăх пыни çинчен илтсен кăшкăрсах йанă.

— Мĕнле лайăх унта çурçĕрте ĕçлеме!—терĕ.—Пĕр-пĕр ĕçпе пынă çынна: „ыран кил тесе ăсататăн та, вăл вара ыран пуласса кĕтсе сан пата 6 уйăх хушши ура йарса пусмасть.

## Ачасем хушшинче

— Йĕлтĕрпе çÿреме епĕ вĕренмеле те...

— Мĕн чарать?

— Йур чарать, çÿреме памасть. Йур çук пулсан... вĕренме мана та çăмăл пулмала.

## Шăмăршă вăрман промхозĕнче

— Февраль уйăхĕнче сирĕн вăрман турттарас план ма тулайман?

— Мĕншĕнни паллă. Ара, февральте 28 кун анчах, 31 кун пулнă пулсан тулаччĕ.

## Лартакансем

Шупашкарти хăш-пĕр учреждениcем вутта хулари вутă сутакан организацирен мар, уйрăм çынсенчен илеççĕ.

— Епĕ Петр Ивановичпа Шупашкарти тĕп библиотека вутă тăратма пултăмăр.

— Ну? Тăратрăр-и?

— Тăратса пĕтерме май килмерĕ. Лартрăмăр.

## Çĕрпÿри шкулта

Çĕрпÿри ачасен техникă станцийĕ, йулашки çулсенче 8 хватер улăштарнă хыççăн, халĕ ахалех ларать. Хватер парасси çинчен никам та шухăшламасть.

— Ачасем! Вырăнтан вырăна куçса çÿрекеннисенчен мĕнле йатлă йăхсем пуррине пĕлетĕр есĕр?

— Вырăнтан вырăна куçса çÿрекен йăхсем-и? Йут патшалăхсенчи цыгансем...

— Тата?

— Хулари ачасен техникă станцийĕ.

## Тĕрĕссипе

Шупашкар районĕнчи Шăмăрш кĕсĕн вăтам шкулĕнче чăваш чĕлхине вĕрентекенрен епĕр ыйтрăмăр:

— Илле Иванчă, есĕ ма пĕртте вĕреннĕ çын пек мар, арăмна кашни кун пекех хĕнесе çÿçрен сĕтĕретĕн?—терĕмĕр.

Вăл каларĕ:

— Кашни кун хĕнесе çÿçрен сĕтĕретĕп?! Çук! Тĕрĕс мар: мартăн 8-мĕшĕнче пĕре те çÿçрен сĕтĕрмен,—терĕ.

## Вĕренмеле ÿкерекен фотограф патĕнче

— Ну, Пашшă, начар фотограф есĕ! Ман сăна пĕтĕмпех палламала мар... пăсса пăрахнă. Ку мăшкăла епĕ тÿсейместĕп.

— Аппаратĕ манăн çавăн пек. Çынна самокритикă тăвать, сăнне пĕтĕмпех улăштарса пăрахать. Санăн сăн-сăпату самокритикă витĕр кăларсан çавăн пек курăнать пулĕ.

## Улшу курăнать

Çăварни тăвакан йалĕпе те вăл пĕчченех кăна пулнă. Икерчĕ çисе, ерех-сăра кÿпсе тултарнăскер, урампа пынă чухне пĕр çынна тĕл пулса калать:

— А! Васили Петрович, çăварни ернинче мĕнле-ха есĕ пит улшăнса кайнă? Палламала та мар...

— Епĕ Васили Петрович мар, Иван Йакăлчă...

— Ахаль мар улшăнса кайнă, терĕм. Йату та улшăннă.

## Ильутка йалĕнче

— Сирĕн прикашчик кооператив укçине хăй укçи пекех сыхласа усранă.

— Ма-ха тата ăна вăл ĕçсе пĕтернĕ?

— Кооперативăнне пĕрле хăйĕнне те пĕтернĕ. Хăйĕн укçине сыхланă пекех пулать ĕнтĕ хăйĕнне те пĕтернĕ пулсан.

Хăшпĕр çтена хаçатсенче орфографи йăнăшĕсем пит нумай.




—Ликпунктран хут лайăх пĕлекен пулса тухрăм.




— Çтенхаçат вуларăм та, хут лайăх пĕлекенрен сахал пĕлекен пулса карăм никак: кунта пĕтĕмпех мана вĕрентнĕ пек мар çыраççĕ.




## Пысăк сăмах

Пысăк сăмах каличчен пысăк чĕлĕ çăкăр тыт, теççĕ. Пысăк чĕлĕ çăкăр тытмалăх хырăм выçман, çавăнпа пысăк сăмахах калас пулĕ. Тăранти (Ишлей районĕ) промколхозĕн правлени членне Григорйев Ивана вăрă тесе калас пулĕ.

Канашран курăс тийесе килнĕ чухне вăл икĕ лав курăс, вăрлас шухăшпа, хăй патне кĕртнĕ. Анчах Йефимăв Васили прикашчик сиссе ăна çийĕнчех тытнă.

Вăрă вăрăм, куçĕ чармак, пилĕкĕ çинçе, теççĕ. Ку вăрă вăрăмах та мар, пилĕкĕ те çинçех мар, куçĕ çеç чармак. Анчах куçĕ чармак пулин те, кукăр аллине „Капкăна" хĕстерчĕ. Хаљ ак колхозниксен умĕнче ответ та тытас пулаŤ, кукăр аллине „Капкăнран" та вĕçертсе кăларас пулаŤ. Инкек!

## Выртнă çерçи

Выртнă çерçийе ан хускат, теççĕ. Трак районĕнчи Çирĕклĕри колхоз председателĕ çерçи мар та, çавăнпа ăна выртнă çĕртенех хускатас терĕмĕр.

Тырă тасатмали машина вăл, авăн çапас ĕçе пĕтерсен, çитес çул ĕçлеме тата аванрах йурăхлă пултăр тесе, 1935-мĕш çулта уйа „практикăна" хăварнă. Машинă унтах çу каçнă, хĕл каçнă, 1936 мĕш çулта та уйрах çу каçнă, кĕркунне усă пама пултарайман, йурăхсăра тухнă, винтисем çĕтнĕ.

Мĕн тăван ĕнтĕ—вăл колхозра винтăсем тăмаççĕ, туха туха ӳкеççĕ: тырă тасатмали машин винтисем туха-туха ӳкнĕ, тата вăл машина темиçе çу, темиçе хĕл уйрах усракан председателĕн пуç мимисене тытакан винтисем туха туха ӳкнĕ.

Хăвартах йусамала... машинне те, председателне те.

## Курман

Кивĕ Упири (Çĕпрел районĕ) „Броневик" колхоз председателĕ 24 лашана 7 çуна, 4 йĕнерчĕк, 3 тилхепе, 5 хăмăт кăна пуррине курас мар тесе, йаланах куçĕсене хупса çӳрет. Куç хупса çӳресен, хама хам курман пек, иртен-çӳрен „Капкан" та курайрас çук мана, тесе шухăшлаŤ вăл.

Шухăшлама ирĕк. Анчах хăйне „Капкăн" пырса çаклатса кайнине те курмасăрах йулнă вăл.

## Майсăр çын

Майсăр çынна кушак пăхма та хушман, теççĕ. Анат Чакри (Турхан районĕ) Иванов майсăр çын та, çапах ăна кушак пăхма мар... колхоз председателĕ пулма суйланă. Халĕ вăл хĕлĕн хырăмĕ аслă тесе, сыснасене выçă пекех усраŤ. Пĕхаканĕ начар пирки сыснисем çурласан çурисене çисе йараççĕ. Колхоз пурлăхне йапăх тытаŤ. Тислĕк тăкма кайнă чух лашасене çавăтса йе утланса çӳреççĕ. Лаши суккăртан мар, тилкепе çукран. Иванов пĕрмайах ерех пички ăшĕнче „ваннăри пек" пурăнаŤ.

Пирĕн шухăшпа, Ивановран тухакан ерех шăршине унран мар, ерех пичкинчен тухнă, тесе шутламала, мĕншĕн тесен Иванов хăйне тиркенине йуратмасŤ, тет.

## Йал тавра 15 минутра

Ухмаха турра пуççапма хушнă, тет те, вăл çамкине ватса пĕтернĕ, тет. Халĕ турра пуççапакансем çук та, Трак районĕнчи Çирĕклĕри колхоз членне—Илйин Никифăра пĕр литăр ерехле йал тавра çара уран йур çинчен чупса çаврăнма хушнă. Вăл йал тавра 15 минутра çаврăннă.

Илйин йал тавра çаврăннинчен ватă çынсем тĕлĕнеççĕ. Чăтăмлă çын пулнă, теççĕ. Илйин вăл колхозра ĕçлемен çын, ĕçлеме тухмасŤ.

Хăмла йăвăç тăрне улăхтараŤ, тенĕ ваттисем. Ерех йал тавра çара уран йур çинчен чупса çаврăнтараŤ, темеле пулаŤ малала.

## Химипе биологи

Пĕр 45 çула йахăн ĕлĕк Александр патшан сутĕç министăрĕнчен шкулсенче ачасене физикă ăслăлăхĕн никĕсĕсемпе паллаштарма ирĕк ыйтнă.

— Ваше превосходителĕства,—тенĕ ыйтма пынă çынни,—ачасене Нйутон саккунĕпе, Архимед саккунĕпе, Бойљ-Мариот саккунĕпе малтанах паллаштармала тусан пит аван пулмала...

— Ачасене мĕн тума ун чухлех саккун парасха,—тенĕ хулпуççисене хăпартса министăр,—вĕсене пĕринпе—турă саккунĕпе те çитет, тенĕ.

Хале физикăн хăшпĕр саккунĕсемпе пирĕн Совет Сойузĕнчи пуçламĕш шкулсенчех паллаштарма тытăнаççĕ. Физикă, хими, биологи ăслăлăхĕсене пирĕн ачасем пит йуратса вĕренеççĕ.

— Епĕр çеç çителĕклĕ пĕлмес пĕр,—теме пултараççĕ Çĕпрел районĕнчи (Тутар республикĕ) Хурăнварти кăтартулă вăтам шкулта вĕренекенсем.

— Ма?

— Кăçал халљхи вăхăта çитсе те пире биологипе химие вĕрентекен çук.

— Кăçал вĕренсе тухакан ачасем аслă шкулсене вĕренме кĕнĕ чухне химипе биологи çинчен ыйтсан мĕн калĕç?

— Вăл ăслăлăхсене вĕрентекен вырăнне, райçутпайĕ „Торичелева пустота“ туса пани çинчен каласа парĕç.

Шкул дирекципе райçутпайне паралич пулнă, преподавателĕ тупас йенĕпе хускалми пулнă.

## Тĕттĕмре

Ăстаран пăста тухнă, теççĕ. Чăвашметровесра ăстасемех лараççĕ, анчах Тутаркас районĕнчи „Наука“ колхоза йанă открыткăна çыракан ăстаран пăста тухнă. Акă открыткăн тепĕр йенче çырнă сăмахсем:

„Содчям что вашы весы 1/IV 500 к Готовы ато за хранея будям дратя Чувашметровес“.

Хамăр йенчен епĕр Чăвашметровеса çăкăрпа аш пекех кирлĕ канаш парасшăн. Чăвашметровесра ликпункт уçас йенĕпе. Вĕренменни тĕттĕм, вĕренни çутă, тенĕ. Ахалĕн пăч тĕттĕмре пĕр-пĕр сотрудник культурлă йапала çине кĕрсе кайса çĕмĕрсе хурĕ.

## 10 кун хватерте

Хурамалта (Йĕпреç р.) пурăнакан Çмирнов учителĕ патне Шупашкарта пурăнакан арăмĕ хăй ача çуратма хатĕрленни çинчен пĕлтерсе çыру йанă. Васкавлă пулсан та, хăй çумне çунат хушса йе ура лартса чупма хал çук çырун. Выртаť хашкаса, Шупашкартан тухса кайса таçта хватере кĕрсе 10 кун выртаť. Арăм Хурамала таврăнса ача çуратса парсан 4 кун пурăнсан кăна хайхи çыру Хурамала çитсе Çмирнов аллине лекет.

„Çырăва арăма вуласа патăм. Ман арăм ахăлтатса кулчĕ“ тет Çмирнов. Етем мар, чăхă та çунатсене çапсах кулĕ.

## Актăпа расхутланă

Шупуçĕнчи (Трак р.) „Хĕрлĕ сухаç“ колхозри ревизи комиççи членĕ колхоз счетоводĕнчен ыйтаť:

— Мĕншĕн-ха сирĕн çăмартасем тухмаççĕ, ăçта расхутлани паллă мар.

— Вĕсен тухĕ, — тет колхоз счетоводĕ, — акă актине вула, вара ăнланатăн ăçта кайнине.

### Актă

1936-мĕш çулта, июнĕн 12-мĕш кунĕнче епĕр айалта алă пусакан „Красный пахарь“ колхозăн чăх-чĕп ферми пуçлăхĕ Николайĕв Михаил тата колхозник Тӳнĕ Кăмрăк Елексейĕ чăнчăнах (вăтăр пилĕк) 35 çăмарта пĕçерсе çирĕмĕр тесе алă пусатпăр.

Кунашкал актă икĕ екземплăр çырнă, вĕсенчен пĕри хамăра йулаť, теприйĕ колхоз ытăмне кайнă.

Фермă пуçлăхĕ Николайĕв
Колхозник Тӳнĕ Кăмрăк Елексейĕ.

Ку актă çинчен пĕлсен фермă чăххи каланă:

— Çăмарта тăватăп, тăватăп, колхоза усă кӳмелĕх нийепле те тăваймастăп, — фермă пуçлăхĕ Николайĕв хушаматлă шур кураках çисе, пĕтерет, — тенĕ.

С. Илйин.

## Çĕмĕрлере

— Шеремет колхозĕ... вылăхсем айала пулаççĕ ĕнтĕ каçал.

— Мĕн пуплен, халĕ ун пек йапăх колхоз пур-и вара? Вылăх вити мар—Çĕмĕрле комбиначĕн клубĕ вăл.

— Е-е-е, пĕлмениç!

Шĕшкĕ Йакку.

# ТУТЛĂ КАЛАÇУСЕМ

## Икĕ кӳршĕ

— Иван Макарч! Сан сысну тăватăм кун ман килкартине кĕнĕ те, шăнса кайнă. Хĕрхентĕм. Ăшăнма кĕлетки тăрăх вĕри шыв сапрăм...

— Йураť. Епĕ те парăма йулмарăм. Ачама санăн арăму типĕтме çакнă кĕпесене, лайăхрах шуралчăр тесе, карта çинчен илсе, йур çине пăрахма хушрăм.

— Епĕ ашкăнса çӳрекен ачуна чарма санăн вăхăт çуккине асă илсе, хулăпа хамах çаптарса йатăм.

— Тав! Епĕ те парăма йулмарăм. Есĕ чăххусем çине çăмарта туманшăн çиленнĕччĕ. Сана çилентервĕшĕн, епĕ вĕсене майĕсене пăрса йатăм. Халĕ ĕнтĕ санăн чăхсене тăрантарас хуйхă çук.

— Епĕ те парăма йулмăп. Санăн йытă тăрантарма тăкак тухаť. Вăл тăкакран хăтарăп. Йытуна вĕлерĕп...

— Санăн хăлха чикки çук пулмала. Пама пултаратăп.

— Ну... Санăн çӳç вĕрăмланса кайнă пулмала... Тытсан бесплатнах татса йарăп.

## Лапкара

— Хаклă прикашчик! Мана 200 грамм кăлбаси касса памăн-ши? Таварлă пулăпа пĕрле выртаканнине. Пулă тути калакан кăлбаси çисе курас. Тутлă ши вăл?

— Укса тӳле те, киле кайса çисе пăх.

— Тĕрĕс калатăн. Апла пулсан мана 200 грам кăлбаси касса пар-ха.

— Итлетĕп, гражданин! Çак кăвакарса ларнине параси-ха? Йураť.

— Хĕрхенетĕп сана, йуратнă продавец, кашни турттармассерен тавара тараса çине пусса хунипе аллу ывăнаť пулĕ.

— Киле кайма васкатăн пулĕ. Калаçса тăрар мар.

— Савнă каççиршă! Сана тепĕр хут чăрмав тума лайăх мар та, анчах... есĕ мана кайалла укçа çителĕклĕ тавăрса памарăн. Санăн, мĕскĕн хĕрĕм, çверхурочнă ĕçленипе пуç мими ывăнаť пулмала та, çавăнпах кайала мĕн чухлĕ тавăрса памаллине шутласа кăлараймарăн пулмала.

— О, çук! Унпа мар. Епĕ сана киле кайма çăмăл пултăр, терĕм. Кайала тавăрса парас укçана пăхăр укçан памала. Есĕ ватăрах пирки вăйсăр çын пулĕ тесе, çул çинче йавăр пăхăр укça сана халран йарасран хăрарăм.

— О, кассă читлĕхĕнче асапланса ларакан ырă чун!

— Сывпул, куççуллĕ сыр пек ырăкăмăллă потребителĕ!

Калаçусен моралĕ: Тутлă калаçу та хăш-пĕр чух йӳçĕ пулаť.

М.

# Тарăхса çитсен

— Чăнахах та тарăхмала,—тесе лăканса ларать сĕтел хушшинче Шараçкин Мĕтри,—есĕ чунтан, хăвна шеллемесĕр тăрăшса ĕçлетĕн, çапах та сана паллакансем те, сан çинчен хаçатсем çине çырса пĕлтерекен те çук. Тĕнчере те пур есĕ, те çук. Вăт мана илес: епĕ ĕçленĕ чухлĕ урăх кам етемми ĕç..енĕ пулĕ... Çапах та мана хамăр йалти çынсемсĕр пуçне урăх никам та палласа çĕлĕк хывса сторовă тăвакан çук. Тарăхмала, ман çинчен хаçатсем çине çырса пĕлтерекен никам та çук... Çыраççĕ пĕр-пĕр Çидăрăв йе Иванов вăрманта йе урăх çĕртре Стаханăв пек ĕçлесе мала тухни çинч н, çав вăхăтрах ман çинчен çырма... м наç-çĕ... Епĕ кам? Епĕ Çĕмĕрле йалĕнчи Октябĕр революци 14 çул тултарнă йачĕпе тăракан колхоз пуçлăхĕ пулатăп. Колхоз правлени пуçлăхĕ! Çĕмĕрле райĕçтăвкомĕнче мана пурте па аççĕ. Есĕ çеç пĕлместĕн. Мĕн пур, тавай! — кăшкăрчĕ тултан кĕрекен арăмне.

— Мĕн пултăр. Кунĕн-çĕрĕн кўпсе çўретĕн, тата тăранмарăн-и? Капла ĕçсен сана ним те çитес çук. Тем курса ларăн пурăнма пĕлменнипе...

— Кам, епĕ-и? Епĕ пурăнма пĕлместĕп-и? Епĕ ĕçсен те пултарăп. Ман хурăнташсем йалта нумай. Йĕпĕр, сăмахран, Йегорăв Николайа. Вăл — пысăк çын, йалсовет председателе тата.., манăн хăта... Унăн шалнĕ Çирки еалпора прикашчикре пурăнать, тата тепĕр шалнĕ—килтех... Çитсă-тавар йенчен аптрас çук. Çирки пулăшса пынă майĕпе... нумайах пулмасть аллăшар метăр çитсă туйантăмăр, карчăк Ахаљ çынсем шăхăрса лараççĕ килте... Тата йала килнĕ краççина 70 пус вырăнне 80 пуса сутса пĕтерчĕ те, виçĕ кун хушши ним куç курмийех ĕçрĕмĕр вара... Илепĕр ман хăтана, Йегорăв Николай тенине. Йалсовет пуçлăхĕ. Питĕ аслă çын вăл... Йалта шкул тума турттарнă йăвăçран хăйне ваљљи çурт туса лартрĕ вĕт, санăн ун пек аслă хурăнташу ĕмĕрте те пулман. Тата манса кайнă-ха: пирĕн колхозра Ларанти Захарĕ завхоз ĕçкунĕсем тăрăх тырпулă валеçнĕ чух çитейми турттарса парса, чылай пысăк фонд хăварать. Вара пĕрле... ĕçсе пурăнатпăр çав „фондран"... Атту кунĕн-çĕрĕн ĕçме ăçтан тупăн укça-тенкĕ?.. Ну йурĕ, çитĕ... Халĕ хам çинчен... епĕ те аптрамала çын мар. Тĕрĕссипе каласан — Йегорăв тени те мана çитеймест. Илепĕр, сăмахран: епĕ малтан йалсовет пуçлăхĕ пулнă. Çавăн чух ман çумра култсбор шучĕпе пухнă укçа пĕр тăват-пилĕк пин тенкĕ таран пулса. Пăхатăп та укça нумай, мĕн тăвас? Укçана чиперĕн пуçтарса чик те кăсйана... çав каçах манăн кил-çурт çунса та карĕ. Ирхине ирех райĕçтăвкома пырса — „мана активлă ĕçленĕшĕн вут тĕртсе çунтарса йачĕçĕ", тесе тыттартăм та, пухнă култ сбор укçине те манран ыйтакан пулмарĕ... çийĕнчех çĕнĕрен, малтанхинчен вăйлă илемлĕ çурт çавăрса лартрăм. Есĕ ухмах пуçупа, мана пурăнма пĕлместĕн, тесе хутăн. Тата астăватăн-и перринче 25 пăт колхоз пылне Свердловски хулине илсе карăм та, майлă хакпа сутса килтĕм. Есĕ „ку укçине колхоза панă" тетĕн пулĕ-ха... çук, пĕтĕмĕшпех хам çума хăвартăм... Вăт, значит, пурăнма пĕлни мĕн тăвать. Есĕ савăн пек хăтланса пăх ха, ыранах суда лекетĕн. Тĕлне пĕлмеле çав... Сăмахран, колхозра патефонпа радиоприйомник ахалех лараччĕç... çийĕнчех сутса йатăм, укçи — каллех хам çумра. Пыр та пуппле пиреніпеле. Çапах та йалта чăкăвташма йуратакан, кураймаң çынсем нумай: „колхоз йапăх ĕçлет, тырпул тухăçне хăпартас шутпа ним те тумаççĕ, ултă капан ыраш уламĕ, 260 лав арпа çĕртсе йачĕç 400 пăт çĕрулми шăнтса йачĕç, ултă лаша вĕлерчĕç тата çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе ним те тумаççĕ", тесе хăш-пĕрисем ман çинчен сăмах сарса çўреç ĕ.. Чăнахах та ыраш уламĕпе арпа çĕрсе карĕ. Мĕн тăвас-ха çĕрекенпе. Лашисем те вилчĕç... Шутласа пăх-ха: вилес шут тытнă выљăхсем вилкелеççĕ пулсан манăн мĕн тăвасха вĕсемпе? Калаçаççĕ çав тĕлне пĕл есĕр.. Çапла, арăм, ахаљрен мар мана Шараçкин Мĕтри, теççĕ. Пурăнма пĕлетĕп! — терĕ те арăмĕ малтан тăнă вырăна пăхрĕ. Арăмĕ çук, тула тухса кайнă. Вара хăй пурăнма пĕлни çинчең каласссине унпа пĕтерчĕ. Епĕр татах калатгарасшăн ăна... халăх сучĕ умĕнче.

**Шĕшкĕ Йакку.**

# Цирк артисĕ

Икĕ билетшăн 4 тенкĕ тўлерĕмĕр те, Трак районĕн и „Хĕрлĕ Шетмĕ" канцељарне кĕрсе лартăмăр. Билет илекен ем нумай. Вăрçса тавлашсах билет туйанаççĕ. Туйанмасăр, Хусан Циркĕ Мăн Шетме килнĕ вĕт.

Епĕр билетсем илсе кĕрсе ларни 1 сехет çитнĕ çĕре „цирк" лăках тулчĕ. Лăках тулчĕ сăмаха çаплипех ăнланмала. Мĕншĕн тесен пирĕн колхоз канцељарне 200 çын кĕрсе вырнаçсан урăх вырăн йулманнине такам та ăнланĕ. Çитменнине „Хĕрлĕ Шетмĕ" колхозĕн канцељарĕн тăршшĕ 6 метăр, урлăшĕ 4 метр çурă çеç.

Пĕр сехет, виççĕ, тăватă сехет çитнĕ çĕре, 3—4 çынна артис хватерне чуптарнă хыççăн, аранаран Димитрийĕв артиса кĕтсе илтĕмĕр.

Йулташсем!.. Ахă, есĕ, кассир, мана малтан укçине шутласа пар, а есĕ, купăçça, мĕн вăйу пĕтиченех ваљс кала.

— Халĕ ĕнтĕ Димитрийĕв артис сире хăйĕн программин черетлĕ номĕрне иљљузийе выљаса парать, алă çу са кĕгсе илепĕр, — пелтерчĕ Димитрий вăн йăмăкĕ Сăпани.

Димитрийĕв тухрĕ, пуçне халăх йеннеле тайса илчĕ те стакан шыва çамки çине лартса выртса тăчĕ, каллех пуç тайрĕ те пўлĕме кĕрсе çухалчĕ.

— Кун пек-иç вăл „иљљузи"! — тесе йултăмăр епĕр.

Ларатпăр 5, 10, 15, 20 минут.

Тăваллăн алă çупатпăр.

— Епĕ пĕлетĕп манăн номĕрсем интереслă пирки алă çупнине, анчах пайан сĕрĕм тивнĕ те чăтма çук пуç ыратать, каçарăр тепĕр пилĕк минут кĕтĕрех, — ответлере Димитриййĕв.

— Халĕ йулташ Димитриййĕв акробатикă выляса парать, — пĕлтерчĕ Сăпани.

Димитриййĕв кĕççе çине тухать те пĕчĕк ачасем „чикĕн кукли" тене вăййа пуç урлă çурăм çине ÿксе кăтартать. Пуçне тайать те 10 минутлăх кĕрсе çухалать. Тăвăллăн алă çупатпăр, программăна пĕтерĕр, тесе кăшкăратпăр.

— Пирĕн программăн йулашки номĕрĕ сире фокстрот ташлама вĕрентесси! — терĕ Димитриййĕв.

— Вĕрентĕр, вĕрентĕр! — тесе кăшкăратпăр.

— Сирĕнтен кам та пулин фокстрот ташлама пĕлекен пур-и? — ыйтать Димитриййĕв.

— Çук! — ответлетпĕр.

— Апла пулсан фокстрота пĕччен ташлама май çук пирки вĕрентейместĕп. Черерен тав тăватăп мана хисепле се пухăннăшăн, сывă пулăр, — терĕ те кусран çухалчĕ пирĕн артис.

Манăн тата манпа пĕрле „Цирк артисне" курма пынă 200 çынăн пĕр ыйту:

— Кам Димитриййĕва ирĕк панă-ши районсем тăрăх колхозниксене улталаса çÿреме?

Сÿпенкке.

---

# Шÿт туса тăрăхлама йуратакан çын

Чăвашрадиокомитет пичетленĕ программăсене пăсса час-часах урăх передачăсем парать. Радиокомитет программине радио итлекенсем шанми пулчĕç.

В. Филиппăв ÿкерчĕкĕ.




— „635 меттăрлă хум çинче" тет... Кăна та суйса каламарĕ-ши?..

# Пӳртри ҫӳп-ҫап



## Мăшкăла йулнă Макçăм

Хурал пӳртне кĕнĕ-кĕменех чĕлĕм мăкăрлантарчĕ те Макçăм, канма тесе выртрĕ. Выртнăвыртманах лĕп шывран та ăшăрах ăшă ыйхă ăшне путрĕ. Акă тĕрлĕ тĕслĕ тĕлĕксем кансĕрлеме пуçларĕç ăна. Вăрман кашласа ларать пек. Темтарăнĕш çырма. Вăл çырма урлă нихăçан упа та, кашкăр та, пĕр упиçан та каçса курман пек, Макçăм та халлапсенче çеç илткеленĕ пек ăна. Акă хаљ хăй çав çырма урлă каçать... Хăйне хăй йатлаçать. Аран-аран çыран хĕрне улăхса çитрĕ пек. Çавăнтах арăмĕ те тăрать пек. Кӳршĕсем ĕçкĕ ĕçеççĕ, çавăнтах, çуракине хатĕрленнĕ май, вăрлăх та тасатаççĕ пек. Тасатнă вăрлăхсене кĕлете кĕртсе хураççĕ. Кĕлет умне Макçăма хурала тăратаççĕ.

— Шакăр-шак! шакканчĕ кантăк каçмакĕ.

Макçăм ыйхăран вăранчĕ.

— Мĕскер! Кам унта?

— Епĕ. Мĕншĕн тухмастăн?.. Кĕлете çаратаççĕ вĕт!..

— Кам çаратать?.. Хамсăрăнах çаратаççĕ-и!.. Хама вăратмасăрах-и?.

Тултан урăх сасă илтĕнмерĕ. Макçăм хăпăл-хапăл сиксе тăчĕ те, хăйне вăратмасăрах кĕлетри вăрлăха „çаратакан“ патне тухма пикенчĕ. Вăл тăнă-тăманах, пӳртри йапаласем те вырăнтан тапранчĕç. Кăмака умĕнчи питлĕх шалтăртатса персе анчĕ. Пăхать Макçăм: çăпата кантрипе кăкараннă иккен питлĕх, ура салтăннă. Кĕтесре ларакан сăмавар та урай варрине тухса чипер инке пек ташлама пуçларĕ, вăл та кăкараннă çăпата кантрипе. Акă шăпăр аври те Макçăмран йулмасть, тĕпелти тенкел те...

— Ну-и мăшкăлаççĕ! — сурчĕ Макçăм.

Питлĕхсемпе сăмаварсенчен хăтăлкаласа урине сыркаларĕ. Кĕлет умне тухрĕ. Никам та çук.

— Ну-и мăшкалаççĕ! — терĕ вăл каллех. — Никам та çаратмасть, ахалех улталаççĕ.

Каллех пӳрте кĕчĕ Макçăм. Сăмаварсем çине çилĕллĕн пăхса илчĕ. Куçкĕски умне тăчĕ. Вара... Куçкĕски çинче хăйĕн сăнне курсан, чут çеç кайала кайса ӳкмерĕ. Хуратса хăварнă ăна... Питкуçне лаппипех хăрăмланă.

— Ну-и мăшкăлаççĕ!—çухăрса йачĕ вăл тепĕр хут.

— Мăшкăлаççĕ...

Ку ĕç, нумайах та пулмасть, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи „Çĕнĕ пурнăç“ колхозра пулса иртнĕ. Мăшкăлаканĕ колхоз председателĕ пулнă теççĕ. Хуралçă ĕçне йĕркене кĕртме, çакă килĕшӳсĕр хăтланчăкран пуçне, урăхла маслет тупайман-ши вара?

**Ламанас.**

## Сăмах çукран сăмах шыракан

Сăмах кирлĕ пулсан, хам пата пырса лар, тет Аслăпатăрйел райĕçтăвкомĕн председателĕ Çтепанăв йулташ. Манăн темĕн чухлĕ сăмах, тет хăшне-пĕрне так ахалех суйеçтеркелесе те калама пултаратăп.

Вăл калать: Епĕр Кĕçĕнйелчĕк районĕпе тунă социалисăмла ăмăрту догăвăрне районри пĕтĕм ĕçхалăхĕ ырларĕ. Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе те, укçа-тенкĕ планне тултарассипе те, вăрман хатĕрлевĕпе çулйĕр строительствин ĕçĕсемпе те Кĕçĕнйелчĕкрен мала тухассишĕн мĕнпур вăйхала хурса кĕрешетпĕр!

Кĕçĕнйелчĕк калать: Сăмах çукран сăмах çеç тупса каламарăн-ши есĕ. Çтепанăв йулташ догăвăрне çырайманçке-ха епĕр,тет.

Çтепанăв йулташ хайпе „ăмăртакана“ хирĕç чĕнмерĕ вара. Чăнласах та сăмах çукран пуљ, урăхларах сăмахсем шыраса ларчĕ. Анчах ăна, çук сăмахне, мĕнле асапланса шырасан та, тупса калаймарĕ.

**Петĕр.**

## Саланса кайнă

Кĕçĕн Кăпасри (Тутаркас районĕ) „Комбайн“ колхозăн çейăлки пĕлтĕр те колхоз уйне кăларманшăн çиленсе тата йур айĕнче сивĕ пирки тарăхса, тапăртатса ташласа ăшăнма шут тытнă. Ташланă, ташланă та, саланса кайнă. Халĕ колхозниксем: „Ах, инкек“, тесе çӳреççĕ, правлени председателĕ ним те шарламасть. Шарласан вăл çейăлкăна йусама тытăнмала пуласран хăрать.

**Йакун Мишши.**

---

# Кайăкланнă сысна

Каçсеренех Сухари Матак шăплăхне çыхса пăрахнă сысна çухăрашăвĕ манерлĕ илтĕнекен тискер сасă пăсать. Вара урамри çынсем сасартăк васкаса ӳксе килĕсене виркĕнеççĕ. Ехер, çав вăхăтра урам хушшинче ватă карчăк йе старик мĕн пулсан — сывпул вара çут тĕнче! Вăл ытлашши сехĕрленнипе тӳрех çĕре персе анать. Йе ача чухнехи пек чупма тăрса чикеленсе кайать. Çитрĕ вара çимĕк, чăвашсем калашле.

Тискер сасăлă çын пĕр самантра телейсĕр таркăн патне пырса çитет.

— Е-е-е, лекрĕни! — тет вара вăл гранатă йатнă пек пуш путылкапа йунаса. —Есĕччĕ-и-ха çав пухура мана критиклекенни? Колхоз улăмне çĕртнĕ-

шĕн суда парас текенни. Çынсене шӳт туса çĕçĕпе хăваланăшăн суд урлă ответ тыттарас текенни. Иртнĕ-çӳренĕ чух ман çине сивĕ куçпа пăхаканни. Ах, ухмах, çамку урлă путылкапа тыттарса йарсан, ху йатна çеç мар, кукаму миçе çула çитнине те манса кайăн.

Урам хушшинче тепĕр чĕрчун таврашĕ курăнсан, тискер сасăлă çын телейсĕр таркăна пăрахса, ун хыççăн виркĕнет. Хăваласа çитсе ăна пуш путылкапа ĕнселеме тытăнать. Çакна пула йулашки вăхăтра çынсем çеç мар, йыткачкасем те Сухари Магак урамĕ тăрăх çӳреме шикленекен пулса çитрĕç. Каç пулсанах вĕсем карта хыçне кайса пытанса хăйусăр вĕркелесе выртаççĕ.

Çак тискер сасăлă çын Сухари Матакĕнчи (Исаклă районĕ Куйбышĕв облăçĕ) „Чапайĕв“ колхозăн бригадире Ахмат Петĕрĕ. Колхозниксем калашле, çак „кайăкланнă сыснана“ никам та чарасшăн мар. Вăл виç-тăват уйăх хушшинче 7—8 колхознике тытса хĕненĕ, пĕр çынна çĕçĕпе чиксе пăрахма тăнă. Темĕнле тĕттĕм меслетсемпе укçа туса кулленех ерех ĕçсе çӳрет. Кĕркунне вайлă çăмăр çунă вăхăтра купалатгарса колхоз улăм урине çертсе йачĕ. Кĕскен каласан, Ахмат Петĕрĕ тунă киревсĕр ĕçсене ни сăмахпа каласа, ни перопа çырса пĕтерейес çук.

Колхоз правленинчипе йалсоветри çынсем Ахмат Петĕрĕ çинчен сăмах тапратсан, аллисене кăна сулаççĕ.

— Хамăра тĕкĕнмен çĕлен-калта хăй çулĕпех çӳретĕр, – теççĕ вĕсем.

Çук, çине тăрсах чарас пулать Ахмат Петĕрне хăй çулĕпе çӳреме. „Капкăн“ хурас пулать ун çулĕ çине. „Капкăна“ çаклансан халăх сучĕ аллине кайса парас пулать. Унсăр нимĕн тусан та лăплантарас çук вăл Ахмат Петĕрĕ тенĕскер.

Пăшатан.

## Тӳрĕ мар прикашчик

В. Филиппăв ӳкернĕ.




— Метр виçине ма тула илсе тухрăн, упăшкам?
— Пĕлместĕн есĕ: физикă наукă каланă тăрăх, сивĕре йапаласем пăчăртанаççĕ, ăшăра сарăлаççĕ. Лавкара ăшă. Çавăнпа киле кайнă чухне метр виçине тула кăларса хăваратăп. Тулти сивĕпе вăл кăштах кĕскелтĕр, тетĕп.

МИТТА ПЕТĔРĔ

# Шакла пуç

Канаш станцинчи „Хресчен çурчĕ" хăнкăлалă тенине Мускавра чухнех илтнĕччĕ епĕ. Нумай пулмасть манăн çак çуртра укçа тӳлесех каç вырт-са тухмала пулчĕ. Ман йевĕрлĕ кĕтмен хăнасене кĕтсе илекен пĕр вăтам çулхи хĕрарăм пĕр пӳлĕ-ме кĕртсе йачĕ те, кантăка кутăн ларакан пу-шă койкă çине мана вырăн пачĕ. Епĕ ăна тивĕç-лĕ сăмахпа тайăлса тав турăм. Вăл, кăмăллăн кулса, пăртакçах каларçĕ те, кĕнĕ алăкранах тух-са куçран çухалчĕ.

Салтăнкаласа, пружинлă койкă çине çепĕç утийалпа витĕнсе выртсанах, хайхи хăнкăласем, виçĕ кун хушши выçăхса тарăхнă сăпсасем пек, манăн çанçурăма сăрса илчĕç. Епĕ тăвăррăн сыв-ласа йатăм. Хăнкăла тени пĕри те ырă мар пу-лĕ-ха та, çапах, çак çуртри пек усал хăнкăласене еп нихăçан та тĕлпулманччĕ. Манпа йунашарах тепĕр койкă çинче пĕр вăрăм пӳллĕскер, хырнă пуçлă, ыйхăллă куçлă, тăрăхларах питлĕскер, çинçерех мăн çын тăсăлса выртать. Кĕçĕ йерне пекех хыçкаланать хăй. Хыçкаланса хăлаçланнă май, чĕлхесĕр хăнкăласемпе калаçа-калаçа йат-лаçать.

— Ăçтан ĕрченĕ вĕсем çакăн чухлĕ? — терĕм епĕ ăна, хамран та ыгларах хĕрхенсе.

— Мур пĕлети вĕсене! — терĕ вăл, ман çине те хăнкăласем çине тарăхнă пекех, тарăхулăн пăхса.

Унăн мăй тавраш ĕсене, алли-урисене çеç мар, тин çеç хырнă шакла пуçне те шатăртаттарсах çыртса илеççĕ лешсем. Кансĕр çав. Хăнкăлалă çуртра ыйхă сыврăма ăна çеç мар, çӳçлĕ çынна та çав тери асаплă.

Кĕçĕрхи канлĕ каç пирĕншĕн маррине кура, вăхăт сисĕнӳсĕр ирттĕр тесе, сăмах çине сăмах хума пикентĕм епĕ. Вăл та, калаçма йуратакан-скер пулчĕ пулас, хыçкаланса анаслана май, ый-хине вĕçтерчĕ.

Хыçк лансан - хыçкалансан, калаçсан - калаçсан тĕрлĕ йумах-халлапсем йарса пама ыйтрăм епĕ. Çав йумах-халлапсенчен хăшпĕрисем çав тери усăлă иккенне каласа ĕнентертĕм.

— Мĕнле усăлă пулсан та, — терĕ манăн шакла пуçлă йулташ, — пĕр йумах та пĕлместĕп. Халла-пĕсене те, такçанах илтнĕскерсене, петĕмпех ман-са пĕтнĕ. Чăн пулнине, хам пурнăçран илсе ка-лама пултаратăп. Иглессӳ килет пулсан, сăмахсе-не хĕрхенсех тăмăп вара...

Епе унпала пĕр хирĕçмесĕрех килĕшрĕм. Ку çын пурнăçри хурапа-шурăсене чылайах курса ирттернĕскер, тен, граждан вăрçи вăхăтĕнче пар-тизанра та çӳренĕ пулĕ, — çавсем çинчен каласа парать ĕнтĕ, тесе ĕмĕтлентĕм.

Вăл манран пĕр пирус ыйтса илчĕ. Ăна вырт-нă çĕртех чĕртсе йачĕ те, кăвак тĕтĕмне ункăн-ункăн макăрлантарнă май, сăмахне пуçларĕ:

— Епĕ безбожник... турăсăр çын, — терĕ вăл, сăмси шатăкĕсенчен тухакан тĕтĕмне кайала çă-вара çатса. — Çамрак ачасем ашшĕн-ывăлĕн, çвет-туй сывлăшĕн хăвачĕпе ӳтленсе пулнине те хам авланса арăм ача çуратнă хыççăн пуçĕпех ĕнен-ме пăрахрам. Манăн ывăл хампала амăшĕ пекех çӳхе шăмшаклă, пуклакрах сăмсалă, сарлака хăл-халă, хура куçлă çинçерех питсăмартилĕччĕ. Арăмпала пĕрле ларнă чухне те, пĕрле утнă чух-не те — ывăл çинчен сăмах хускалсан — йаланах пĕр-пĕринпе килĕшсе шухăшлаттăмăр: ку пирĕн ача никам хăвачĕпе те мар, хамăртанах ӳтленсе пулчĕ пулас, тесе куçран-куçа пăхса савăнăçлă кулаттăмăр. Ача та кулатчĕ... Макăратчĕ те.

Ун чухне епĕ хамăр йалти колхозăн председа-тĕлĕ пулса ĕçлеттĕм. Ывăл ачалă арăма пĕр ĕçе те кăлармастăм. Хам пуçăмра: сывлăх пур çинче ĕç-лемесен те пурнăпăр-ха, теттĕм. Хăшпĕр чухне арăм манпала килĕшмесчĕ. „Иаланах пӳртре ху-пăнса ларнипе кăна мар, уйа тухса, ертелпе пĕр-ле ĕçлессĕм те килет", — тетчĕ. Епĕ вара кӳле-шеттĕм. Уйа тухса, йут арçынсене курса кала-çассу килет пулĕ ĕнтĕ, — теттĕм. Арăм, вăтанса тарăхнипе, кунĕ-кунĕпе йĕретчĕ. „Есĕ ху... çӳре-тĕн те, мана та çапла пулĕ тесе шанмастăн ик-кен" тетчĕ. Вара тавлашкаласа та илеттĕмĕр. Ма-лашне те каплах килĕшӳ пулмасан, ĕмĕр-ĕмĕрех пĕрле пурăнаймастпăр та пулĕ, теттĕмĕр.

...Хам арăма кăна мар еп, чылай арăмсене та-рăхтарнă. Хам арăма кăна мар еп, чылай ачалă арăмсене ĕçе тухма чăрмантарнă. Йаçлĕ усăр тесе, укçа та уйăрса панăччĕ районран. Уçмарăм. Укçине урăх çĕре расхутларăм. Ачасен йачĕсемшĕн илсе килнĕ çемçе çимĕççене хамăр колхозри ревизи ко-миççин председателĕпе иксĕмĕр ерех ĕçнĕ хыççăн закускă вырăнне чăмла-чăмлах çисе пĕтертĕмĕр. Пурпĕрех пăсăлса кайатчĕ вăл çимĕç. Пăсăлсассăн, лайăх йапала та начарланать вĕт. Пăсăлса начарланнă йапалана епĕ çав тери йуратмастăп. Çавăн пек, пĕр кĕркунне хурса хăварнă виçĕ шăтăк çилос уçиччене ĕх çĕрсе кайнăччĕ Мĕн тĕрлĕ лайăх апат çĕрсе пăсăлчĕ. Пăсăлнăскере, епĕ хам кăна мар, вылăхсем те йуратмарĕç. Актă çыртăмăр та, „çĕр-тен пулнă, çĕрех кайтăр" тесе тăпра тултарса хутăмăр вара. Кайран вăл-ку ан пултăр тесе, ре-визи комиççин председателне те алă пустартăм.

Çавăн пекех тата, колхозри лайăх лашасенчен чăн лайăххи „Машка" пурччĕ пирĕн. Çуна кӳлнĕ-и ăна, урапа-и — есĕ ларна-ларманах, çĕхĕрен пек вĕçсе ĕрĕхетчĕ. Кĕсре выльăх апла йуртнине еп кунчул пулса та астумастăп. Иртне раштавра мар, ĕлĕкхинче, çак „Машкăна" кӳлтĕмĕр те, ха-мăр йалтан 27 çухрăмра пурăнакан пуçана патне хăнана тесе карăмăр арăмпа. Хĕл кунĕ вĕт. Сивĕ. Çапах писнĕ пăтă сивĕниччен пуçана килне персе çитрĕмĕр. Çуна çинче килнĕ пăтă ти-рĕкне хăнасен умне лартсан, пурте пĕр харăс тĕлĕнсе пĕçĕ çапрĕç. „Пăтă сивĕниччене ĕх çитрĕр-и?" — теççĕ. Çитрĕмĕр çав... Пирĕн колхозăн ла-шисем çапла лайăх çав, — тетĕп. Мана мухтама пуçларĕç. Мухта-мухта тавтуса ĕçтернĕ май, хă-вăрттăнах ӳсĕртсе йачĕç. Хӳрине авасса аватакан куккук пек кăшкăрса йурлатăп. Арăма та, вăл ытлашши ӳсĕр пулмасан та, хампа пĕрлех йур-лама хушатăп. Йурла-йурла тухса килтĕмĕр. Хайхи манăн „Машкă" паçăрхинчен те хытăрах йуртать. Епĕ тата хытăрах хăвалатăп... Кăшкăра-тăп. Вăл — йуртать... йуртать. Ахăрса пушаврипе йунатăп. Хытăран хытă йуртма хушатăп. Йурла-

тăп. Пĕр çырмана анатала аннă вăхăтра, темшĕн, пуçхирлĕ чикеленчĕ ӳкрĕ манăн „Машкă“. Хам çав тери тарăхса çитрĕм. Ача амăшĕпе те, кĕсрепе те йатлаçатăп. Вăл хускалма та шутламасть. Тăваррăн сывласа выртать. Пăхатăп... Лайăхрах тинкерсе пăхатăп та, „Машă“ манăн хăм пăрахать иккен. Вăл пĕркунах пĕтĕ пулнă. „Машкăна“ хĕрхенсе макăрма пуçларĕ арăм. Ăна хăтăрса пăрахрăм. Çитĕнсе çитмесĕр тертленсе çуралнă тыхана çул айăккине йатса кĕрсе, шурă йурпа витсе хăвартăм. Çак ĕç хыççăн „Машкă“ хăй те сывлăхсăрланса йулчĕ. Мĕн тĕрлĕ лайăх лаша шăнса пăсăлчĕ. Пăсăлса начарланнă йапалана епĕ çав тери йуратмастăп. Тепĕр виçĕ кунтанах вилсе выртрĕ вăл. Ăна кайса пытартăмăр. Çапла, çапла, хăрушă чирпе чирленĕрен вăхăтсăр вилсе вăхăтсăр çĕре кĕчĕ, тесе актă çырса хутăм. Каллех, кайран вăл-ку ан пултăр тесе, хайхи ревизи комиççин председателне алă пустартăм. Вăл итлесшĕн мар турткаланчĕ пăртак. „Мана ĕçке чĕнмен-ха пуçану, акă алă та пусмастăп“, тет. Хăвăн пуçану та мана ан чĕнтĕр, терĕм. Аран итлерĕ. Ӳкете кĕчĕ вара.

Çавăн пекех тата тепĕр ĕç пулса иртрĕ. Епĕ кирек-хăш вăхăтра та хамăр ертел членĕсене хыпаланарах ĕçлер-ха, тесе хистеместĕм. Ĕлкĕрĕпĕр-ха йерипе... Кăçалхи ĕç пур-пĕрех килес çула йулмасть вăл, теттĕм. Анчах ку сăмах тĕрĕсе килмерĕ. Пĕр çулхине çапла ултă гектар тырă вырăнмасăрах йур айне пулса йулчĕ. Мĕн тĕрлĕ ырă йапала йурăхсăра тухрĕ вĕт! Пăсăлчĕ. Пăсăлнă йапалана епĕ çав тери йуратмастăп. Вара хама та йуратмарĕç. „Есĕ ху пăсăлнă“ терĕç колхозниксем. Çаплах каларĕç. Мана председатĕл вырăнĕнчен кăларчĕç те пăрахрĕç. Епĕ, ĕлĕкех ĕçме вĕреннĕскер, тарăхнипе тата хытăрах ĕçме пуçларăм. Кунĕн-çĕрĕн хирĕлет манăн арăм. Унпала йаланах йатлаçатăп. Ĕçлес килмест. Пурнăç начарланчĕ.

...Çапах пурнатăп. Мана, ытти членсемпе пĕрлех, вăрман касма йарасшăн калаçрĕç пухура. Итлемерĕм. Касĕç-ха.. Вăрман касассишĕн çуралман-ха епĕ, терĕм.

Çуркунне те шăлне йĕрсе çитрĕ. Ака тунă çĕре кайма каларĕ бригадир. Ăна, — мĕн мăшкăласа çӳретĕн? — тесе, хам патăмран хăваларăм та кăлартăм.

Йаçлĕ уçнăччĕ. Ача унта йулнипе, арăм йаланах ĕçреччĕ. Шанас килместчĕ. Ĕненместĕм. Йут арçынсемпе пĕрлех ĕçлесе çӳрет пуль ĕнтĕ, теттĕм. Çавăн пекех пулнă чăнласах та. Кĕркунне, тырă валеçнĕ вăхăтра, манăн арăм хăш пĕр арçынсенчен те ытларах тырă илчĕ. Тата ăна тĕрĕллĕ кĕпе парса парнелерĕç. Мана, пĕр ĕçкунĕ те туманшăн, пĕр пĕрчĕ тырăсăр хăварчĕç. „Арçын пуçупа епĕ ĕçлесе тунă çăкăра çисе пурăнма намăса пĕлетне?“ — тет ман арăм. Вара чăтаймарăм. Тарăхнипе ĕçе-ĕçе, ĕнене сутса йатăм. Хай арăм ача пек кăшкăрса йĕрет. „Кашни колхозник ĕнеллĕ пулас тесе тăрăшнă чух есĕ мана ĕнесĕр типĕтсе хăвартăн“, — тет. Епĕ ăна итлерĕм. Ытлашши ан хурлантăр, пĕтĕмпех типĕтсе хăварас мар тесе — качака илсе патăм. Выльăх вĕт качака та... Шултра măйракалă выльăх..

Паллах, кăчухне пĕрен-кайăн ĕçсĕр пурăнма майĕ çук. Ĕçсĕр пурнакана хĕрхенмеççĕ. Ĕçсĕр пурнатăп тесен, ĕненмеççĕ. Ĕçсĕр пурăнма кансĕртерех хăвна та. Ĕçлемесĕр пурăнма хăнăхса çитнĕ çынна çумăнти арăму та йуратма пăрахать.

Мана хăшпĕр хам майлă çынсем тăрăшнипе кооператăр туса хучĕç. Ĕçлетĕп... Ĕçетĕп. Ерех нумайччĕ манăн лавкара. Пур патне алă пырать вĕт. Пĕлĕш-хурăнташсем йышлăланчĕç. Пурна-килле хай манăн лавка лайăх таварсенчен самайах пушанчĕ. Ревизи тăватпăр! — терĕç. Лайăх кăна тепĕр хут ĕçрĕм те вара, кооператăртан кăларса пăрахнине те сисмерĕм. Хам тухасса сыввăнах тухрăм та çав, тăватă пине йахăн укçа тухмарĕ. Укçисем питĕ аванчĕ. Аван йапалана епĕ йаланах йурататăп. Анчах хама йуратмарĕç. Ывăл ачалă арăм та, питĕм çинех сурса ашшĕ патне тухса карĕ. Ачине те алла хăвармарĕ. Ташлакан та пулнăччĕ ачи... Питĕ аванччĕ.

Халĕ ĕнтĕ пĕтĕм пурлăха хут çине шута илчĕç. Çуртсăр тăратса хăвараççĕ пуль, тетĕп. Тата хама та çак çылăхсемшĕн суд умне тăратма шухăшлаççĕ, тет. Тем те курса тăрăн. Пайан ку ĕç пирки хам пуçăма хыракан парикмахĕрпе те калаçрăм. „Есĕ айăплă мар пуль“, — терĕ вăл. Ĕненсех те пĕтерместĕп. Прокурор хăй патне чĕнтернĕ-ха. Ыран çавăнта кĕретĕп... Хайхи, ревизи комиççин председателне çеç те мар, хам майлисене чылайăшне манпа пĕрле чĕнтернĕ.

* * *

Çапла пĕтерчĕ хăйĕн калавне манпала йунашар койкă çинче хыçкаланса выртакан шакла пуç. Хăнкăласемпе çапăçса йалт йăлăхса çитрĕм. Çапах, çак çурт пек хăнкăлалă çурт тата пур-ши, тесшĕн мар еп... Вăл пулĕ. Акă, ак çак, ман çумра выртакан пек шакла пуç тата пур ши, тесе ыйтасшăн еп. Кала-ха, вулаканăм! Пур-ши тата?.. Ăçта вăл? Ăна тупсанах кирлĕ çĕре чĕнтересчĕ. Тӳрлетесчĕ. Мĕнле пурăнмала маррине вĕрентесчĕ.

Секретарь и вып. редактор *И. ИЛЛАРИОНОВ.* За ответ. редактора *Ф. АЛЕКСАНДРОВ*

Сдано в производство 19/III—37 г. Подписано к печати 10/IV—37 г. Уполномоч. Чувашглавлита № 213. Заказ № 653.

Формат бумаги 58×88$^1/_{16}$ Объем 2, 5 п. л. Чебоксары, тип. № 1 Чувашгиза. Тираж 6000. Изд.-газ «Канаш

# ИТАЛИРЕ.

Испании шалти ěçне хутшăнмала марри çинчен тунă договăра пăхмасăр, Испани порчěсене Итали вуншер пин салтак ăсатса хăварнă тата 25 пинлě çар йама хатěрленет. (ТАСС)




— Господин генерал, унта темěскер ÿксе йулчě.
— А-а, вăл Испанин шалти ěçне хутшăнмала марри çинчен тунă договăр.